44-15
3577

КУÇМА ЧУЛКАÇ

# Сунарçă халлапĕсем



КУÇМА ЧУЛКАÇ

3577

# СУНАРÇĂ ХАЛЛАПĔСЕМ

*ИККĔМĔШ ИЗДАНИ*

Ӳкерчĕкĕсене П. СИЗОВ тунă

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1944



## Пĕр каçрах çĕр те икĕ куян тытрăм.

Хисеплĕ ачасем!

Хăвăрах пĕлетĕр, манăн атте те, асатте те, асаттен аслашшĕ те сунарçă пулман. Асаттен аслашшĕ кăна мар, пирĕн пĕтĕм йăхра та ĕмĕрне сунарçă пулман. Çавăнпа манран пурте çапла ыйтаççĕ:

— Çтаппан пичче, эсĕ мĕнле майпа çав тери чаплă та паллă сунарçă пулнă-ха?

Тÿррипе каласан, эпĕ чаплă та паллă сунарçă пулнинчен нимĕнех те тĕлĕнмелли çук. Мĕншĕн тесен ман пек сунарçă пулма такам та пултарать. Чаплă сунарçă пулма пĕр япала çеç кирлĕ, вăл— темĕн те пĕр шутлама пултаракан пуç пулать. Ун пек ăслă пуç пулсан, вара такам та чаплă сунарçă пулма пултарать. Анчах манăнни пек ăслă пуç кирек камăн та çук çав. Акă мĕншĕн эпĕ тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулса тăтăм.

Манăн пуç чăнах та питĕ ăслă. Вăл темĕнле тĕлĕнмелле япаласем те шухăшласа кăларать. Тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулмалли шухăша та вăлах шутласа кăларчĕ. Вăл акă мĕнле пулчĕ.

Эпĕ ун чухне вунă çулхи ачаччĕ. Эпĕ ытти ачасем пек имшеркке те хăюсăр пулман, атте тăвакан пур ĕçе те хутшăнаттăм, пысăк ачасемпе пĕрле Ямаш вăрманне куянсем ĕрлеме те каяттăм. Тӳрех каламалла: ман пек паттăр ялта урăх пĕр ача та пулман.

Пĕрре мана, пысăк ачасемпе пĕрле, хамăр ял сунарçисем Ямаш вăрманне куянсем ĕрлеме илсе кайрĕç. Вăрмана çитеспе сунарçăсем пурте уй хĕрне тăрса юлчĕç, пире—ачасене Вĕçкĕн Ваççан Пракухĕ вăрманалла илсе кĕчĕ те карталатса тăратса тухрĕ, хăй тепĕр хĕррине çитсе сас париччен пурне те шăп тăма хушса хăварчĕ.

— Ать-ать-ать!—тесе кăшкăрса ячĕ Пракух пурне те карталатса тухнă хыççăн.

Пракух сасси çумне самантрах темиçе тĕрлĕ сасă хутшăнса кайрĕ.

— Ать-ать-ать! Охо-охо-охо! Эхе-эхе-эхе!

Эпир пĕринчен пĕри ирттерсе хытăрах кăшкăрса пыратпăр. Çапла кăшкăрса пĕр кĕтӳ куян хăваласа кăлартăмăр. Уй хĕрне тăрса юлнă сунарçăсем пăшалĕсене хӳплеттерме пуçларĕç. Эпир татах хавхаланса ĕрлетпĕр, тата хытăрах кăшкăраша уй хĕрнелле тухма васкатпăр.

— Охо-хо-хо!!! Эхе-хе-хе!!!

Вăрмантан пĕрхĕнсе тухсанах пурте пĕр çĕре пухăнтăмăр. Вĕçкĕн Ваçça пăшалне авăрларĕ те катăк шăлĕнчен сурчăкне сирпĕте-сирпĕте калаçма тытăнчĕ:

— Петĕм те, куян пакăлтах йăванса кайрĕ.




Вӑрмантан пӗрхӗнсе тухсанах пурте пӗр ҫӗре
пухӑнтӑмӑр.

Кунпа чаранса та тăмарăм, самантрах тепĕрне персе антартăм. Пăхатăп, ман паталлах виççĕмĕш куянĕ сиксе пырать. Йăпăр-япăр пăшала тĕллесе тытрăм, анчах эпĕ икĕ кĕпçинчен те пенĕ иккен!.. Кăна тытасси пулмарĕ...

— Тытнисем ăçта вара санăн, Ваçça пичче? — тесе ыйтрăмăр эпир.

Вĕçкĕн Ваçça пире илтмĕш пек пулса çаплах çаптарать сăмахне:

— Ну, иккĕпе те çитĕ-ха терĕм те персе ӳкернĕ куянсем патне чупрăм. Эпĕ иккен вĕсенне иккĕшĕнне те урисене шалтăрах хуçса пăрахнă.

— Куянсем ăçта санăн, çавна кала-ха эсĕ, Ваçça пичче? — тесе ыйтрĕ сунарçăсенчен пĕри.

Вĕçкĕн Ваçça сӳннĕ чĕлĕмне пĕр-икĕ хутчен ĕмсе илчĕ те хăйĕнчен ыйтакан сунарçă енне çавранса тăчĕ.

— Куянсем-и? — тесе ыйтрĕ вăл унтан куçĕсене мăч-мăч хупа-хупа илсе.

— Ара, куянсем çав, хăв персе ӳкернисем.

— Э-эй, вĕсем хам пынине курсанах пăшал пулькисем пек таçта тарса çухалчĕç.

Вĕçкĕн Ваçça чĕлĕмне тепĕр хут ĕмсе илчĕ те лач! сурса айккинелле пăрăнчĕ. Унăн вырăнне Кусар Матви тухса тăчĕ.

— Манăн тата интересларах пулчĕ, — терĕ вăл, хăйĕн шĕвĕр сухалĕ вĕçне пĕтĕркелесе. — Эпĕ Тăмвар вĕçнерех тăраттăм. Пăхатăп, пысăк карсак ман паталлах çĕмĕрттерсе пырать. Мĕллĕрех лектĕр тесе, хам патăмах çитертĕм çакна. Иксĕ-



— Манăн икĕ ура хушшинчен тепĕр куянĕ вăшт!
тухса вĕçтерчĕ.

мĕр хушши пĕр икĕ хăлаç çеç юлсан, хайхине çамкинчен тĕллерĕм те кĕрслеттерсе ятăм, карсак мĕкĕлт-макăлт чикеленсе кайрĕ. Пырса пăхатăп, — карсакăн икĕ куçне те шăтарса пăрахнă...

— Матви пичче, карсакна кăтарт-ха! — терĕмĕр эпир.

— Тăрса тарчĕ-çке, мур илесшĕ. Çамкаран мар, ураран пемеллеччĕ иккен тесе çеç кулянса юлтăм.

— Икĕ куçĕнчен те лекнĕ пулсан, епле-ха вăл санран тарма пултарнă? — тет Вĕçкĕн Ваççа, хăй пĕрре те суйман пек пулса.

— Тарсан та, вăл манран хăтăлаймасть. Эпĕ ăна, суккăрскерне, хĕле кĕрсен те тытатăп-тытатăпах, — тет Кусар Матви.

— Эсир пăшал персе те пĕр куян тытайман, эпĕ вăт, нимĕн пемесĕрех икĕ куян тытаттăмччĕ, — тет Карсак Çтаппанĕ çав вăхăтра.

— Епле апла?! — тесе ыйтрăмăр эпир пĕр харăсах.

— Акă мĕнле. Пĕр куянĕ сиксе тухрĕ те ман паталла вĕçтерчĕ. Эпĕ тармакланса тăрса куяна тĕллерĕм, персе ӳкермелли çеç юлнăччĕ, манăн икĕ ура хушшинчен тепĕр куянĕ вăшт! тухса вĕçтерчĕ. Эпĕ шартах сиксе палтăрт çеç йăваланса юлтăм, çапла вара иккĕрен пĕрне те тытаймарăм.

Сунарçăсем кашниех хăйсемпе мĕн пулни çинчен каласа пĕтернĕ хыççăн эпир каллех карталанса тухрăмăр. Каллех темиçе куян кăларса па-

тӑмӑр. Анчах вӗсем пӗр куянне те тытаймарӗҫ. Ҫа пла эпир кунӗпе Ямаш вӑрманӗ тӑрӑх кӑшкӑрашса ҫӳрерӗмӗр. Каҫа май ывӑнсах ҫитрӗмӗр, пурин сассисем те тытӑнса ларчӗҫ. Малтан пире кашнинех пилӗкшер пус паратпӑр тесе астарса тухнӑ сунарҫӑсем кайран, куян тытайман тесе, пӗри те пӗр пус памарӗҫ. Эпир вара суеҫӗ сунарҫӑсене тем пекех ҫиленсе ҫитрӗмӗр.

— Мӗншӗн пӗр куянне те тытаймарӑр? — тесе ыйтрӑм эпӗ Вӗҫкӗн Ваҫҫаран.

— Ха, йӗпе сӑмса, мӗн ыйтать тата! — терӗ вӑл ман ҫине шур куҫӗсемпе пӑхса.

— Хӳрисем кӗске ҫав, ҫавӑнпа тыттармарӗҫ. Ав манӑн ура хушшинченех тухса кайрӗ пӗри, ҫапах та тытса пулмарӗ, — тет Карсак Ҫтаппанӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн эпир вӗсене пӗри те пӗр сӑмах чӗнмесӗрех килелле утрӑмӑр. Пирӗн ял Ямаш вӑрманӗнчен ҫывӑхах мар, ҫавӑнпа эпир киле тӗттӗм пулсан тин ҫитрӗмӗр.

Ҫак вӑрӑм ҫулта ӗнтӗ манӑн пуҫ тӗнчери чи чаплӑ та паллӑ сунарҫӑ пулмалли шухӑша шухӑшласа кӑларчӗ, вӑл шухӑш вара мана хама та питӗ килӗшрӗ. Анчах манӑн пӗрре те хамӑр ялти суеҫӗ сунарҫӑсем пек пулас килмерӗ, мӗншӗн тесен эпӗ хам тӳрӗ ҫынна юрататӑп, суеҫтерме пултараймастӑп.

Киле таврӑнсанах эпӗ аттене пӑшал илсе пама ыйтрӑм.

— Пӑшал илсе пар тата ӑна, — тесе витлесе илчӗ атте. — Уруна ҫӑпата та туса тӑхӑнаймас-

тăн, пăшал илсе пама ыйтатăн. Сунарçă пулма ĕмĕтлениччен малтан сăмсуна шăлма вĕренесчĕ, — тесе ятласа илчĕ атте.

Сунарçă пулас шухăша эпĕ çапах та пăрахмарăм. Пăрахма мар, вăл шухăш кунсерен ӳссе пычĕ. Тĕлĕкре каççерен уйсемпе вăрмансем тăрăх çӳрекен пултăм, пĕрре кайсах вуншар куянран кая мар тытса килекен пултăм.

Çакнашкал тĕлĕксене хĕле кĕриччен курса пурăнтăм. Тĕлĕкре курнипех куянсен йĕрĕсене те паллакан пултăм. Çав йĕрсем тăрăх кайсан, пĕр куянне те тытмасăр таврăнмастăмччĕ вара.

Пĕрре эпĕ, темĕнле сăлтавпа, Трихван мучисем патне кайрăм. Трихван мучи улмуççи пахчине тухнă та сура-сурах куянсене ятлаçать.

Пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм. Трихван мучин улмуççи пахчине куянсем урлă-пирлĕ йĕр туса пĕтернĕ, улмуççисене кăшласа шап-шурă туса хăварнă.

— Сунарçисем питĕ япăх-çке пирĕн. Хăйсем шăши тытма пĕлмеççĕ, çапах та мухтанса çӳреççĕ, — тет Трихван мучи.

Эпĕ çавăнтах Трихван мучисен пахчине килекен куянсене тытса пĕтересси çинчен шутлама пуçларăм. Манăн пуç вĕсене мĕнле тытмалли меле часах шутласа тупрĕ. Çулла нӳхрепе хăйма вăрлама кĕрекен Матви пиччесен кушакне атте мăйкăч лартса тытнăччĕ. Çакна аса илтĕм те, эпĕ те Трихван мучисен пахчине килекен куянсене мăйкăчпа тытма шутларăм. Тепĕр кун кунĕ-



Куянсем мӑйкӑчсене ҫакланнӑ та унталла-кунталла ҫеҫ сиккелесе тӑраҫҫӗ.

пе мăйкăчсем яврăм, пурĕ çĕр те икĕ мăйкăч явса хатĕрлерĕм. Каçпа, яш-кĕрĕмсен вăййи лăплансан, вăл мăйкăчсене пурне те Трихван мучисен пахчине кайса улмуççисем çумне çыхса сара-сара хăвартăм, ирпе аннене ирех вăратма хушрăм.

Анчах çывăрасси пулмарĕ, çутăлассине кĕтсех çĕре ирттерсе ятăм. Кантăкран кăвак çутă кĕре пуçласанах эпĕ йăпăр-япăр тумлантăм та тӳрех Трихван мучисен пахчине чупрăм. Пуç мĕн шутлани тĕрĕсех пулчĕ. Куянсем мăйкăчсене çакланнă та унталла-кунталла çеç сиккелесе тăраççĕ.

Эпĕ çав тери савăнса кайрăм. Карсак Çтаппанĕ куянсен хӳрисем кĕске тенĕрен, эпĕ чи малтан вĕсен хӳрисене пăхрăм. Вăл пĕрре те суйман иккен, куянсен хӳрисем чăнах та кĕске. Ку вара ман ĕçе чутах чăрмантарса хуратчĕ.

— Мĕнле илсе каяс-ха кусене, — тетĕп.

Эпĕ вĕсене хӳрисенчен тытсах каясшăн пулнăччĕ. Аран-аран килте çунашка пурри çинчен аса илтĕм. Куянсене çаплипех хăваратăп та хам çунашка патне чупатăп.

Манăн кил ытлах инçе пулманран, çунашкана часах илсе килтĕм те куянсене кӳлме пуçларăм. Вĕсем калама çук савăнса кайрĕç. Мĕншĕн савăннине эпĕ часах чухласа илтĕм. Вĕсен текех шăнса тăрас килмен иккен, пурте ăшă пӳрте кайма васканă. Çакна пĕлсен, эпĕ вĕсене самантрах кӳлсе лартрăм. Хам вăрăм çапă илтĕм те эхе-хех! тесе кăшкăрса ятăм. Манăн куянсем çил



Манăн куянсем çил пек çĕмĕрттерсе кайрĕç, хам килнĕ йĕр тăрăх тӳрех хамăр пата пырса кĕчĕç.

пек çěмěрттерсе кайрěç, хам килнě йěр тăрăх тӳрех хамăр пата пырса кěчěç. Çапла эпě пěр каçрах çěр те икě куян тытрăм.

Эпě çěр те икě куян тытнă хыпар часах пěтěм яла сарăлчě. Тул çутăлнă çутăлман пирěн пата халăх капланса килчě. Карта тулли куяна курсан, çынсем пěççисене çапсах тěлěнчěç. Карсак Çтаппанě те хашкаса чупса çитрě.

— Тархасшăн каласа пар-ха, мěнле майпа тытрăн эсě çакăн чухлě куян? — тесе ыйтать манран.

— Каласа парсан та усси çук, эсě вěт урусем хушшинчен тухса тарнă куяна та тытайман, — терěм эпě ăна.

Карсак Çтаппанě помидор пекех хěрелсе кайрě те пěр сăмах чěнмесěрех тухса утрě. Ун хыççăнах пирěн пата Трихван мучи пырса кěчě. Вăл мана пуçран лăпкарě те пăшал илме тесе кěсйинчен пилěк тенкě укçа кăларса пачě.

Çакăн хыççăн эпě пěр иккěленмесěрех тěнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулма шутларăм. Анчах ун пек чаплă сунарçă пуличчен манăн пайтах тискер кайăксемпе вěçен кайăксем тытса хам çинчен пěтěм таврана мухтавлă ят сармалла пулчě. Вăл мухтавлă ят хам вăтăр çул тултарнă тěле тин сарăлса çитрě. Сире ěнтě, çав ят сарăлнă хыççăн темěн тěрлě тискер кайăксемпе вěçен кайăксене хам тěлěнмелле мелсемпе тытни çинчен каласа парам.

## Тилĕ тытма та вĕрентĕм.

Хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн ялта сунарçăсем питех нумай пулнă. Кăтра Карачăм, Кусар Матви, Вĕçкĕн Ваççа, Карсак Çтаппанĕ, Çатма Петĕрĕ тата ыттисем те. Чылайĕшĕн ячĕсене те маннă ĕнтĕ эпĕ.

Анчах вĕсем пĕри те ман пек пултарайман. Хăшĕ-пĕрисем хĕлĕпе те пĕр куян тытайман. Хăйсем çаплах кунĕ-кунĕпе çăпата çĕтсе вăрман тăрăх сулланса çӳретчĕç.

Кăтра Карачăм хăйне чи ватă сунарçă тесе шутлатчĕ. Ваттине ватахчĕ ĕнтĕ: пичĕсем пĕркеленсе çитнĕччĕ, сухалĕ кăвакарса шĕвелсе юлнăччĕ, пуç тӳпинче пĕр çӳç пĕрчи те çукчĕ. Çапла пулин те ăна никам та чаплă сунарçă тесе шутламан. Вăл тискер кайăксен йăлисене те пĕлместчĕ, кашни сунарçах: упа пыл çиме юратмасть, пилеш тесен каççах каять, тетчĕ.

Кусар Матви тата: манăн асатте те, асаттен аслашшĕ те сунарçă пулнă, тесе мухтанатчĕ. Анчах хăй пĕр куян тытса курмасăрах вилсе кайрĕ.

Вĕçкĕн Ваççа вара суеçтерес тĕлĕшпе пуринчен те ирттерсе яратчĕ. Çавăншăнах ăна Вĕçкĕн Ваççа тесе ят пачĕç. Вăл та, Кăтра Карачăм пе-

кех, хӑй ӗмӗрӗнче пӗр куян та тытса курайман пулмалла. Намӑс курас мар тесе, вӑл яланах пӗччен ҫӳретчӗ. Юлашкинчен, ҫак Ваҫҫа кунсерен пӗрер куян ҫакса килекен пулчӗ, куянне вара ҫурӑмӗ хыҫне ҫакатчӗ те, урам тӑрӑх ерипен те мӑнкӑмӑллӑн утса пыратчӗ.

— Ваҫҫа пӑяхам, епле пӗтмеҫҫӗ-ха саншӑн куянсем?—тесе тӗлӗнсе ыйтатчӗҫ кӳршӗ арӑмӗсем.

— Ваҫҫашӑн куллен ҫирӗмшер куян ҫуралса пырать,—тетчӗ вӑл, ыйтакансем ҫине пӑхмасӑрах.

Анчах эпӗ Ваҫҫана нихӑҫан та ӗненместӗм. Ҫавӑнпа пӗрре унӑн хыҫӗнчен кайса сӑнарӑм. Ваҫҫа Тӑмвар тӗлне ҫитрӗ те манӑн куҫран пачах ҫухалчӗ. Эпӗ ниҫталла кайма аптӑраса чӗлӗме табак тултарма тытӑнтӑм. Чӗлӗме чӗртсе те ярайманрӑм,—Ваҫҫа тепӗр енчен куян ҫакса та тухрӗ. Тӗлӗнсех кайрӑм, епле-ха ку пӑшал пемесӗрех куян тытрӗ, тетӗп. Каҫпала капкӑн лартса хӑварман-ши ку тесе, юриех вӑл тухнӑ вырӑна кайса пӑхрӑм. Ак, тамаша, Ваҫҫа тухнӑ вырӑнта сӳс ланчашкисем ҫеҫ вӗҫкелесе тӑраҫҫӗ. Вӗҫкӗн Ваҫҫа куянне мӗнле тытнине часах тавҫӑра илтӗм. Ку, иккен, улталать-мӗн. Эпӗ ун хыҫҫӑнваскарӑм. Ваҫҫа, яланхи пекех, куянне ҫурӑмӗ хыҫне ҫакнӑ та, ерипен утса ялалла кӗрет.

— Аван-и, Ваҫҫа пичче? — тетӗп.

— Аван, аван! Акӑ, пӗрне анкарти хыҫӗнчех персе ӳкертӗм-ха, — тет.

Манӑн унӑн куянне тытса пӑхас килчӗ. Анчах Ваҫҫа яхӑнне те ямасть. Эпӗ ҫапах та куянне

хӳринчен ярса илтӗм. Ваççа куяна карт туртрӗ, куян ăшӗнчен виçӗ çурăм тыллана сӳс лӗпӗст! йăтăнса тухрӗ. Манăн алла куянăн хырăмне çӗлесе лартнă çип вӗçӗ кӗрсе кайнă иккен. Ваççа пӗр шуралса, пӗр хӗрелсе илчӗ те, нимӗн чӗнмесӗр хăвăрттăн малалла утрӗ. Çакăн хыççăн вăл сунарçă маррине хамăр ял çеç мар, пӗтӗм тавра пӗлсе çитрӗ. Вăл иккен Çӗрпӳ пасарӗнче куян тирӗ илнӗ те, унăн ăшне сӳс ланчашкисем чиксе, кунсерен мухтанса çӳренӗ.

Ытти сунарçăсем те Вӗçкӗн Ваççаран ăстах пулман. Çатма Петӗрӗ кăна пăртак пултаратчӗ. Мана хама та тилӗ тытма çав вӗрентрӗ. Вăл акă мӗнле пулчӗ.

Пӗрре эпир хурал пӳртӗнче халлапланса ларатăмăр. Çатма Петӗрӗ хӗрсех калаçма пуçларӗ:

— Эсир пӗри те ман пек пултараймастăр,—тет çакă.—Эпӗ вăт, тилӗн йӗрне çеç тупам, тилли ман алăра пулатех.

— Суятăн,—тет Вӗçкӗн Ваççа,—сирӗн пеккисене çын тытнине курсан та çитетчӗ.

— Сирӗн пеккисем куян ăшне сӳс ланчашки тултарнипе те кăмăллă пулаççӗ-мӗн! Миçе хутчен сӗтӗрсе çӳрерӗн-ха çав куян тирне ял тăрăх?—тесе хучӗ Çатма Петӗрӗ Ваççана.

Эпир пӗр тапхăр кулса илтӗмӗр те, каллех Çатма Петӗрне каласа пама ыйтрăмăр.

— Питех ӗненместӗр пулсан, атьăр Ямаш вăрманне,—тет çак.—Тилӗ йӗрне шыраса тупăпăр та, тиллине епле тытнине хăвăрах курăр.

Вăл самантрах лашине кўлчĕ те пире Ямаш вăрманне лартса кайрĕ.

Вăрмана эпир лăпах кăнтăрла умĕн çитрĕмĕр. Çатма Петĕрĕ лашине пĕр вар пуçне тăратса хăварчĕ те пире вăрман ăшнелле ертсе кайрĕ. Хамăр карталанса тилĕ йĕрĕ шыраса пыратпăр. Нумаях та каймарăмăр, Кăтра Карачăм кăшкăрса та ячĕ:

— Акă, тупрăм, килĕр-ха кунта часрах!—тет. Вăл тилĕ йĕрĕ çинех тухнă-мĕн.

Пурте Кăтра Карачăм патне чупса пытăмăр. Чăнах та, Карачăм умĕнче тин çеç хывса хăварнă йĕр тăсăлса выртать. Эпир ун тăрăх йĕрлесе кайрăмăр та, часах пĕр чăтлăх тĕлне пырса тухрăмăр.

— Шăп пулăр,—тет Çатма Петĕрĕ.—Эсир çакăнта тăрăр, эпир, Лапшу Çтаппанĕпе, çак чăтлăх тавра çаврăнса килĕпĕр.

Сунарçăсем тăрса юлчĕç. Эпир, Çатма Петĕрĕпе, чăтлăх тавра кайрăмăр. Петĕр çурăмĕ хыçне уртса янă михĕ ăшĕнчен пĕр çĕклем кантра туртса кăларчĕ.

— Мĕн тăвасшăн эсĕ ку кантрапа?—тесе ыйтатăп çакăнтан.

Çатма Петĕрĕ нимĕн чĕнмесĕрех кантрана хамăр хыçран карса пыма тытăнчĕ. Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Кантри çине кашни пĕр метртанах хĕрлĕ хăмач татăкĕсем çыхса тухнă, вĕсем пирĕн хыçран ялавсем пекех илемлĕн вĕçсе юлаççĕ. Çапла эпир хăмач татăкĕсем çыхнă кантрана карса, хамăр




Çатма Петĕрĕ тĕллерĕ те пĕрре персех тилле йăвантарса ячĕ.

малтан кайнă вырăнах пырса тухрăмăр. Ку тĕлте Çатма Петĕрĕ вунă метра яхăн кармасăрах хăварчĕ.

— Халех тытăпăр тиллине,—тет Çатма Петĕрĕ.—Анчах малтан иккĕн шалалла кĕрсе ерипен калаçкаласа çӳрĕр. Астăвăр, калаçасса хуллен калаçăр. Хытă шавласан, тиллине тытаймăпăр та.

Кусар Матвипе Вĕçкĕн Ваççа чăтлăх ăшне кĕрсе кайрĕç, эпир, Петĕрпе иксĕмĕр, пĕр пысăк çăка хыçне пытанса юлтăмăр.

Унччен те пулмарĕ, мана Петĕр аякран кăрт! тĕртсе илчĕ. Шалалла пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм:—шалта, чăтлăхра, тилĕ урлă та пирлĕ чупкаласа çӳрет, хăмачлă кантра патне çывхарсанах каялла пĕрхĕнет. Çапла çӳресен-çӳресен çак тилĕ кантра карман вырăна шыраса тупрĕ те тӳрех пирĕн паталла вĕçтерчĕ. Вăл çитесси çич-сакăр утăм çеç тăрса юлнăччĕ, Çатма Петĕрĕ тĕллерĕ те пĕрре персех тилле йăвантарса ячĕ. Эпĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм.

Тилле çапла тĕлĕнмелле мелпе тытнă хыççăн эпĕ кунсерен Çатма Петĕрĕ патне çӳреме тытăнтăм.

— Петĕр пичче, каласа пар-ха, тилĕ яланах хăмачлă кантра карман вырăна тупать-и?—тесе ыйтаттăм.

Анчах вăл, темĕн чухлĕ йăлăнсан та, мана тӳррипе каласа памастчĕ.

— Петĕр пичче, асту,—терĕм ăна пĕрреччен.— Хăçан та пулсан эпĕ те кирлĕ пулăп-ха.

Çатма Петĕрĕ çапах та хăйĕн мелĕ çинчен каласа памарĕ. Вара эпĕ çиленнипе килелле тухса утрăм, хам çул тăршшĕпе тилĕсене тытасси çинчен шухăшласа пытăм.

Ачасем, хăвăрах пĕлетĕр, çакăн пек чухне ман пуçа калама çук ăслă шухăшсем пырса кĕреççĕ. Эпĕ çĕрĕпе шутласа выртрăм, ирe хирĕç тилĕсен йăлисене веçех ăнкартса çитрĕм. Вĕсем ире май апат шыраççĕ иккен, кăнтăрла пĕр чăтлăха кĕрсе выртса канлĕн çывăраççĕ. Тилĕсем нихăçан та çĕре выртса çывăрмаççĕ: çĕре выртсан, вĕсене кашкăрсем, упасем, шакалсем тытса çиме пултараççĕ. Çавăнпа вĕсем е пысăк çăка хăвăлне кĕрсе, е пĕр-пĕр хуçăлса аннă йывăçăн пысăк тункати тăрне хăпарса выртаççĕ. Тилĕ йĕрĕ чăтлăха кĕрсе кайсан, вара пĕрре иккĕленмелли те çук: тилли те çавăнтах пулать!

Аста сунарçăсем çакнашкал выран тупсан, вăл чăтлăх тавралла хĕрлĕ хăмач татăкĕсем çыхнă çип е кантра карса тухаççĕ, пĕр вырăна кармасăр хăварса, унта тĕл перекен сунарçа тăратса хăвараççĕ те хăйсем малалла кĕрсе каяççĕ.

Тилĕ питех те чее. Вăл темĕнле пĕчĕк сасса та таçтанах илтсе тарма пултарать. Çавăнпа шала кĕрсе каякан сунарçăсем ерипен калаçса çӳренипех канлĕ çывăракан тилле вăратма пултараççĕ. Вĕсен сассине илтсенех тилĕ вăранса каять, самантрах йĕри-тавралла пăхса илет те, шалта утса çӳрекен сунарçăсене курах каять. Тунката çинчен ерипен сиксе анса вăл вара тарма пике-

нет. Анчах вăл часах сунарçăсем карса хăварнă хăмачлă кантра патне çитсе тухать.

Тилĕсем нихăçан та карса хăварнă кантра урлă каçса каймаççĕ. Вĕсем яланах каялла çаврăнса тата хытăрах тарма пикенеççĕ. Анчах вĕсен çулне каллех çавнашкал кантра пӳлсе лартать. Тилĕсем вара, тарăхса çитсе, каллĕ-маллĕ хытă чупса çӳреме пуçлаççĕ. Çапла вĕсем, кантрапа карса хăварман вырăна тупса, унтан çилçĕмрен пек тухса сунарçăсенчен тарса хăтăлма ĕмĕтленеççĕ. Паллах, вĕсен ĕмĕтленни те ахалех пулать, вĕсене унта сыхласа тăракан сунарçă пур-пĕрех пере-пере ӳкерет.

Пĕр каç шутласа выртса, эпĕ çакна çеç мар пĕлтĕм. Эпĕ чăтлăхалла кĕртсе янă Кусар Матвипе Вĕçкĕн Ваççана Çатма Петĕрĕ мĕншĕн ерипен калаçма хушнине те ăнланса илтĕм. Шалалла кĕрсе каякансем хытă шавланипе канлĕ çывăракан тилĕ сасартăк вăранса каять те, ăна-кăна тавçăрса илмесĕрех, хăмачлă кантрана асăрхаймасть, вăл ун урлах каçса каять. Вара, паллах, кантра кармасăр хăварнă вырăнта темиçе кун кĕтсе ларсан та пĕр тилĕ те тытаймастăн.

Пурне те паллă, çакнашкал лайăх меле Çатма Петĕрĕ ниепле те хăй тĕллĕн шутласа кăларма пултарайман. Вăл ăна такамран илтсе çеç пĕлме пултарнă. Анчах, çак мел тилĕсем тытма лайăх пулсан та, эпĕ ăна килĕштермерĕм. Килĕштерме те май çук, мĕншĕн тесен пĕр тилĕ тытас пулсан та, пиллĕкĕн-улттăн ланккаса çӳремелле,

кантра явмалла, кантрине хӑмачсемпе илемлетмелле, юлашкинчен, ӑна йӑтса ҫӳресе ӑшша писмелле. Эпӗ унашкал сунарҫӑ мар. Эпӗ пӗччен кайсах кунне вуншар тилӗрен кая мар тытма юрататӑп.

Ҫапла эпӗ тилӗсем тытмалли ҫӑмӑл меле хам шутласа кӑлартӑм. Шантарсах калатӑп, ҫакнашкал меле Ҫатма Петӗрӗ мар, тӗнчери пӗр сунарҫӑ та шутласа кӑларас ҫук. Вӑл мел манӑн питех те ҫӑмӑл, унпа эпӗ каҫсерен вӑтӑршар е ытларах та тилӗ тытса таврӑнатӑп. Ҫавӑн пек лайӑх та ҫӑмӑл меле манӑн ӑслӑ пуҫ акӑ мӗнле шутласа кӑларчӗ.

Ҫулла, Ҫӗрпӳ пасарӗнчен таврӑннӑ май, манӑн Ямаш вӑрманӗ урлӑ каҫмалла пулчӗ. Эпӗ ҫулсӑрмӗн кӗрех утрӑм, ҫапла хӗлле Ҫатма Петӗрӗ тилӗ тытнӑ вырӑна пырса тухрӑм. Килнӗ-килнех, ҫав чӑтлӑха та кӗрсе курам-ха тесе шутларӑм. Шаларан та шала кӗрсе пыратӑп, ӑҫта пӑхнӑ унта ура пусмалла мар ҫатрака та чӑтлӑх ларать. Ҫапла эпӗ пӗр тарӑн вар хӗррине пырса тухрӑм. Унӑн тӗпне ӗмӗрне те ҫын анса курман пулӗ, мӗншӗн тесен ҫӳлтен пӑхсан тӗпӗ те курӑнмасть. Эпӗ ӑнакӑна пӑхмасӑрах ҫырма тӗпне анса кайрӑм. Пӑхатӑп та шалтах тӗлӗнсе кайрӑм,—ҫырма тӗпӗнче ӑҫта пӑхнӑ унта тилӗ чӗпписем кӗшӗлтетсе ҫӳреҫҫӗ.

— Э-э, ку варта тилӗсен йӑви иккен,—терӗм,— ну пурӑнӑҫ кайрӗ Лапшу Ҫтаппанӗн,—терӗм.

Шутлама тытӑнтӑм тилӗ йӑвисене. Анчах шут-



Куянĕ хытăран хытă çухăрать, тиллисем унăн сассине илтсе таçтан-таçтан пуçтаранса килеççĕ.

лaнă çĕртех кaç пулса ларчĕ. Питĕ хĕпĕртесе таврăнтăм вăл кун пасартан.

Кĕркунне, юр çăвас умĕн, эпĕ çав вар тĕпне пысăк шăтăк алтрăм та, унта хăмаран çапса тунă тарăн ещĕк кĕртсе лартрăм. Хĕллехи тăман кaç-сенче эпĕ яланах çав ещĕке чĕрĕ куян кайса яраттăмччĕ. Манăн йĕре асар-писер сăлпăран тă-ман хам хыççăнах çĕтерсе хăваратчĕ.

Тилĕсем куян шăршине темиçе çухрăмранах сисеççĕ. Вĕсем вара, выçă майĕпе, пĕрне-пĕри ăмăртсах çав куян патнелле чупаççĕ, эпĕ чавнă шăтăка пĕрин хыççăн тепри ӳксе пыраççĕ. Куянĕ хытăран хытă çухăрать, тиллисем унăн сассине илтсе таçтан-таçтан пуçтарăнса килеççĕ.

Çапла эпĕ кaççерен вăтăршар, хĕрĕхшер тилĕ тытса Ĕсмĕл пасарне лавĕ-лавĕпе тилĕ тирĕ ăсататтăм. Çакăн хыççăн манран хамăр ялти сунарçăсем кăна мар, пĕтĕм таврари сунарçăсем те тĕлĕне пуçларĕç. Çатма Петĕрĕ те кунсерен ман пата пырса йăлăнма тытăнчĕ.

— Çтаппан шăлнăм, тархасшăн каласа парсам ĕнтĕ: эсĕ мĕнле çавăн чухлех тилĕ тытатăн?— тесе минрететчĕ.

— Çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ вĕт, Петĕр пичче,—теттĕм эпĕ ăна. Çав вăхăтрах хам лаша кӳлсе, кaçпа шăтăка тулса ларнă тилĕсене тиеме тухса каяттăм.

## Пăсара пирки ĕмĕрте пĕрре суйма та тиврĕ.

Пĕр çулхине манăн карчăк йывăрах чирлесе виçĕ уйăх хушши вырăнпа выртрĕ. Хуйхăрнипе хам та чутах чирлесе каяттăм, усал чиртен ыхра çинипе çеç хăтăлкаласа юлтăм.

Карчăк чирлĕ вăхăтра эпĕ яланах шыв кӳме хам каяттăм. Çăл патĕнчен шалтах тĕлĕнсе таврăнаттăм. Кунта кӳршĕ арăмĕсем пуçтарăнатчĕç те, текех ялта курни-илтни çинчен пакăлтататчĕç.

— Паян ирпе Патюн Микихвер кинĕн сурăхĕ икĕ путек туса панă, иккĕшĕ те тата така пулнă,— тет.

— Ĕнéр Карсак Çтаппанĕн аслă хĕрĕ икерчĕ пĕçернĕ чух çатмине ӳкерсе çĕмĕрнĕ, тет те, амăшĕ вара кунĕпех хирĕçсе çӳренĕ, тет.

— Вăл хĕртен хĕр пулмарĕ ĕнтĕ. Çăкăр пĕçерме те пĕлмест те, ара вăрçмасăр ăçтан чăтăн... Кăçал хĕлĕпе те ик хутăр çеç тунă, тет.

— Çĕрĕк каçпа тата Таруç инкесем чут çеç вилсе выртман, тет.

— Мĕн пулнă-ши апла?!

— Кĕçĕн кинĕ кăмакине иртерех хупнă, тет те, вара пурне те сĕрĕм тивнĕ, тет.

Мĕн çинчен кăна каламастчĕç-ши вĕсем! Унта Кукша Иванпа Вĕçкĕн Ваççа ыран пĕрле мунча хутса кĕме шутлани çинчен те, Çатма Петĕрĕн арăмĕ виçĕмкун çуллă пăтă пĕçерсе çитерни çинчен те тата тем-тем çинчен те калаçатчĕç. Эпĕ итлесе тăраттăм та шалтах тĕлĕнсе каяттăм: пĕрре шыв патне кайнипех пĕчĕк ялти пур хыпарсене те пĕлсе таврăнаттăм.

Пĕрре çапла эпĕ ирех шыв кӳме кайрăм. Çăл патĕнче каллех хĕрарăмсем яланхи пекех хĕрсе калаçаççĕ.

— Сăмах çинех çитрĕн, Çтаппан пăяхам,—тет мана Тури Хветут арăмĕ.

— Мĕн пулчĕ тата, е мана çиме тапратнăччĕ-и?—тесе ыйтатăп çакăнтан.

— Ыр çын çинчен ыррисĕр пуçне мĕн каламалли пултăр,—тесе хурать Путек Çтаппанĕн карчăкĕ.

— Çапах та, ман çинчен сăмах тапратнă пулĕ-ха эсир?—тетĕп.

— Çĕркаç Курти пиччесенне пĕр тăрукăнах пиллĕк чăх пăвса кайнă-çке!..—теççĕ хĕрарăмсем.

— Темĕнле çавнашкал чăх пăвакан кайăксем нумайланса кайрĕç кăçал.

— Сана килнех пырса каласшăнччĕ-ха, çав кайăксене тытса пĕтерсемччĕ, Çтаппан пăяхам,— теççĕ хĕрарăмсем.

— Чăхсемсĕр тăрса юлатпăр вĕт, тытса пĕтерсемччĕ çав мур кайăкĕсене!—тесе йăлăнма тытăнчĕç хĕрарăмсем.

— Ăçтан пĕлетĕр-ха эсир вĕсем кайăкне?— тетĕп.

— Ара, Курти мучи карчăкĕ курнă, тет. Хĕрĕх уралла, кайăкĕ хытă чупать, тет.

— Апла пулсан, епле тытăп-ха эпĕ вĕсене? Манăн икĕ ура çеç вĕт,—тетĕп çаксене.

— Темиçе çĕр уралла пулсан та эсĕ тытатăнах вĕсене,—теççĕ хĕрарăмсем.

— Карчăк сывалтăр-ха, вара пĕтĕмпех тытса пĕтеретĕп,—терĕм те килелле васкарăм.

Тепĕр кунне çăл патĕнче хĕрарăмсем каллех чăхсене пăвса кайни çинчен калаçаççĕ.

— Курти мучисенне татах пилĕк чăх, Качун Микулайĕнне икĕ чăх, Мускав Петĕрĕнне çичĕ чăхпа пĕртен-пĕр автанне пăвса кайнă, тет,—тет пĕр арăмĕ.

— Эй тур, тур, мăнтарăн автанĕ, ытла та хитре аватăтчĕ-çке çав! Ăна пăвиччен Сахрун Мĕкĕтин автанне пăвмалла пулнă,—тет тепри.

— Çтаппан пăяхам, тархасшăн тытса пĕтер вăл кайăксене!—тесе каллех тархаслаççĕ мана çак хĕрарăмсем.

Эпĕ каллех сăмах та хушмарăм,—тӳрех килелле утрăм. Тепĕр кунне ялта çакнашкал хыпар сарăлчĕ: Курти мучисем юлашки чăххисене тĕпсакайне лартнă пулать те, çĕрĕпех сыхласа ларнă пулать, анчах чăххисене пурпĕрех унтан та пăвса кайнă пулать. Вĕçкĕн Ваçça арăмĕ тата хăйĕн чăххисене ăшă витене хупнипе çеç çăлса хăварнă пулать.



Ял хӗррисенче, ҫырма пуҫӗсенче чӑх виллисем нумайран та нумай тӗл пулма пуҫларӗҫ.

Çак хыпарсене эпĕ питех ĕненмерĕм, анчах каярахпа вĕсем чăн пулнине хам куçпах куртăм. Ялта чăхсем сахаллансах пыра пуçларĕç, ял хĕррисенче, çырма пуçĕсенче чăх виллисем нумайран та нумай тĕл пулма пуçларĕç. Çынсем чăххисене тĕпсакайĕсене, витесене хупса усрама тытăнчĕç. Çакăн хыççăн вара ялти хĕрарăмсем хам киле пырсах тархаслама тытăнчĕç.

Хăвăрах пĕлетĕр, эпĕ мăнкăмăллă çын мар, эпĕ çынсене нумай пуççаптарса тăма юратмастăп. Манăн чирлĕ карчăкпа выльăх-чĕрлĕхсене ялти арăмсем черетпе пăхма пулчĕç те, чăхсене пăвакан мур кайăкĕсене тытса пĕтерме килĕшрĕм.

Малтан эпĕ вăл кайăксен йĕрне сăнарăм. Халиччен пăсарасем тытса курман пулин те, чăхсене вĕсем пăвнине часах чухласа илтĕм.

Пăсарасем çинчен эпĕ ытти сунарçăсенчен çакна илтнĕччĕ. Вĕсем тутлă çиме юратаççĕ, çавăнпа чăх ашне кăмăлларах параççĕ. Пăсара питех те чее, çын пынине вăл таçтанах сисет те тĕплĕ çĕре пытанса ларать. Ăна вара ăста сунарçăсем те пурте тытма пултараймаççĕ. Çав сунарçăсемех мана пăсара тирĕ хаклă тăни çинчен те каласа панăччĕ.

Такам та пĕлет, манран темĕнле чее кайăк та тарса хăтăлаймасть. Анчах пăсара тирĕ хаклă тăрать тенĕрен вĕсене эпĕ пăшалпа мар, алтуйипех персе тытма шутласа хутăм, мĕншĕн тесен пăшалпа персе тытнă пăсара тирĕсем шăтăкланса пĕтнипе йўне кайма пултараççĕ терĕм.

Çапла эпĕ юманран сулăмлă алтуйи турăм та, Шашкăпа пĕрле пăсара йĕрĕсем тăрăх кайрăмăр. Вĕсен йĕрĕсем пурте Ямаш вăрманне пырса тухрĕç.

Ямаш вăрманĕ калама çук пысăк. Унта темĕн тĕрлĕ тискер кайăксем те йышлă пурăнаççĕ. Çавăнпа нумай сунарçăсем вăл вăрмана шалалла кĕме те хăраççĕ. Çапла пулин те эпĕ хăраса-туса тăмарăм. Эпир, Шашкăпа иксĕмĕр, йĕрсем тăрăх çак вăрмана çитсе шалаллах кĕрсе кайрăмăр. Анчах кайнăçемĕн тĕлĕнмелле япала пулса пырать: пăсара йĕрĕсем çăкасем тĕлне çитеççĕ те пĕте-пĕте лараççĕ.

— Ăçта хăямата пытанаççĕ-ха кăсем?—тетĕп.

Пакшасем пек йывăç тăрринче пурăнмаççĕ-ши тесе, çӳлелле пăхатăп:—пĕр пăсара та курăнмасть.

Çапла лăпах кăнтăрлаччен кĕрт тăрăх ашса çӳрерĕмĕр. Кун каç енне сулăнма пуçларĕ.

— Мĕн тăвас-ха? Пĕр пăсарине те тытмасăр таврăннине пĕлсен, манран пĕтĕм ял кулма пултарать вĕт,—терĕм.

Самантрах ман пуç тĕлĕнмелле ăслă меслет шухăшласа кăларчĕ.

— Ара, çăка хăвăлĕнче пурăнмаççĕ-ши ку пăсарасем?—терĕм.

Пăсара йĕрĕ çухалнă ват çăка тĕлне çитетĕп те алтуйипе шан! тутаратăп. Çăка хăвăлĕнчен сасартăк алла яхăн пăсара сиксе тухрĕ. Манăн Шашкă пĕрин хыççăн теприн çине сиксе ӳксе пăва-пăва пăрахать. Шашкă пăвма ĕлкĕреймен-

нине хам алтуйипе пере-пере антаратăп. Çапла Шашкăпа иксĕмĕр пĕр хăвăлтан сиксе тухнă пăсарасене пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тытрăмăр. Шутларăм та лăпах вунсакăр пăсара пулнă иккен.

Чăнах та пăсара тирĕ калама çук аван иккен. Пĕрре килнĕскер арăм валли те, хам валли те кĕрĕклĕх çителĕклех тытас, терĕм. Алтуйипе пĕр çăка хыççăн тепĕр çăкана шаккаса çӳретĕп. Кашни çăка хăвăлĕнченех пĕрер кĕтӳ пăсара сиксе тухать, тытнă пеккине пурне те вар пуçне купаласа пыратăп.

Çапла тул çутăлнă çĕре пĕр вар пуçĕнчи шырлана хĕррисемпе танах пăсара тытса купаларăм. Шутлама тытăнтăм: пилĕкçĕртен те иртрĕ, купара татах та нумай—виçĕ кунта та шутласа пĕтерес çук.

Хамран-хам тĕлĕнсе кайрăм. Халиччен пĕр сунарçă та çакăн чухлĕ пăсара тытни çинчен илтменччĕ, пĕрререн пĕрре тухсах мĕн чухлĕ пăсара тытрăм-ха!..

Пăсарасемпе аппаланса хам та сисмен,—тул янках çутăлса кайнă. Эпĕ хайхи кусене киле епле илсе каясси çинчен шутлама пуçларăм. Ăслă пуçăм кунта та лайăх мел тупса пачĕ. Шашкăна мăкла така тирĕнчен çĕлетнĕ алса ăшне кĕртсе çӳлĕрех тунката çине лартрăм та, пăсарасене сыхлама хушса хăвартăм. Хам васкасах яла пăсара нимине чĕнме чупрăм. Анчах вăрмантан та тухаймарăм, мана хирĕç Ямаш стрелукĕ Ярми Са-



Ҫӑка хӑвӑлӗнчен алла яхӑк пӑсара сиксе тухрӗ.

харё пыра парать. Ярми Сахарне питех те усал ҫын тетчӗҫ, ҫаванпа эпӗ хӑрасах кайрӑм.

— Ку усал манӑн пӑсарасене туртса илме те пултарать-ҫке. Вара юратнӑ карчӑка кӗрӗк те ҫӗлетсе тӑхӑнтартасси пулас ҫук,—терӗм.

— Мӗн туса ҫӳретӗн кунта?—тесе ыйтать ҫак манран.

— Пӗлместӗн-и мӗн эпӗ камне? Эпӗ Лапшу Ҫтаппанӗ пулатӑп вӗт, куянсем пур-ши тесе тухрӑм та,—пӗр куян та тӗл пулмарӗ,—тетӗп.

— Санӑн куяну мӗн вӑл, акӑ манӑнне ёнер каҫпа виҫӗ тӗп ҫӑка касса кайнӑ, эсӗ курмарӑн-и кам каснине?—тет.

— Каснине курман та, анчах ҫӑкисене турттарса кайнине куртӑм, виҫӗ мӑн лав тиесех Пахчал еннелле анса кайрӗҫ,—тетӗп.

Ярми Сахарӗ савӑнсах Пахчал еннелле вӗҫтерчӗ. Эпӗ те васкасах хамӑр ялалла утрӑм. Эпӗ пӗр купа пӑсара тытни ҫинчен пӗлсен, пӗтӗм ял ҫӗкленчӗ, пурте пӑсара нимине пырасшӑн. Анчах эпӗ вӗсене:

— Мана пиллӗк лав та ҫитет,—терӗм.

Чӑнах та пиллӗк лав ҫине шӑнӑҫтартӑмӑр та киле аран-аран турттарса ҫитертӗмӗр.

Ҫав пӑсарасене пула манӑн ӗмӗрте пӗрре суймалла та пулчӗ. Хӑвӑрах шутлӑр-ха, ҫавӑн чухне Ярми Сахарне суйман пулсан, арӑмпа иксӗмӗре валли пӑсара кӗрӗкӗпе тӑлӑп та ҫӗлетес ҫукчӗ вӗт.

---

**Кашкăрне чĕрĕллех тытрăм, анчах сылтăм аллăм аманчĕ.**

Ямаш вăрманĕнчи пăсарасене пĕр касрах тытса таврăннă хыççăн, мана хамăр ялти çынсем çеç мар, таврари пĕтĕм халăх чаплă та паллă сунарçă вырăнне шутлама пуçларĕ. Çакăн хыççăн халичченхи чаплă сунарçăсем те ман пата пырса çав тери нумай пăсарана мĕнле майпа тытни çинчен каласа пама йăлăнатчĕç.

Сунарçăсем кăна мар, ман пата ялти ача-пăчасем те пыратчĕç, вĕсем те эпĕ пиллĕк лав пăсара мĕнле тытма пултарнине пĕлесшĕн çунатчĕç.

Тӳрех каламалла, пирĕн ялти ачасем пĕрре те суеçĕ сунарçăсем пек мар, вĕсем пурте питĕ тӳрĕ çын пулса çитĕнме тăрăшаççĕ. Çавăнпа эпĕ вĕсене пит юрататтăм, пăсара тытни çинчен çеç мар, ытти тискер кайăксене епле тытни çинчен те каласа параттăм. Вĕсем эпĕ каланисене питех тимлĕн итлесе ларатчĕç, ӳссе çитсен пурте ман пек чаплă та паллă сунарçă пулма ĕмĕтленетчĕç.

Пĕрре çапла ман пата ачасем пӳрт туллиех пухăнчĕç, хама йĕри-тавра сырса илчĕç те, пĕрин хыççăн тепри ыйтса тĕпчеме пуçларĕç:

— Çтаппан пичче! Санăн аллу ăçта аманнă? — тесе ыйтрĕ пĕр ачи, манăн сылтăм алă çинчи мăйăр пысăкĕш аманнă вырăна кăтартса. Ун хыççăн ыттисем те мана йăлăнма тытăнчĕç:

— Çтаппан пичче, каласа парсам ĕнтĕ, санăн аллу ăçта аманнă? — теççĕ çак ачасем.

— Хăвăрах пĕлетĕр, эпĕ мăнкăмăллă çын мар. Питех итлес тетĕр пулсан, каласа пама пултаратăп, анчах унăн хăйĕн историйĕ пур, — тетĕп.

— Апла пулсан, çав историрен пуçласа каласа парăр, — теççĕ вĕсем.

— Чăнласах итлес тетĕр пулсан, каласа парăп, анчах эсир ывăнса çывăрса каймăр-и? — тетĕп çаксене.

— Çук, çук, Çтаппан пичче. Ывăнмастпăр та, çывăрмастпăр та, — теççĕ вĕсем.

— Çтаппан пичче, питех вăрăм-и вăл истори? — тесе ыйтрĕ тепĕр ачи.

— Калама çук вăрăм, ачасем. Çип пек тăсса кайсан, уйăх патнех çитет, çăмхалас пулсан, хуран пысăкĕш çăмха пулать, перчетке çыхас пулсан, пĕр пӳрнескине те çыхма çитмест, каласа парас пулсан — пĕр уйăхах тăсăлать, — тетĕп çаксене.

— Вăрăм пулсан та каласа пар, çывăрмастпăр, — теççĕ ачасем.

— Шантарсах калатăр пулин те, малтан сире çакна асăрхаттаратăп: пĕр уйăх хушши итлесе ларнă хыççăн выçă вилсен, уншăн вара мана ан айăплăр, — терĕм.

— Çук, çук Çтаппан пичче! Выçă та вилместпĕр, вилсен те сана айăпламастпăр, — теççĕ вĕсем.

— Пурте пĕлетĕр, манăн карчăк пур. Колхоза кĕриччен питех никресчĕ вăл. У-у-х, мĕн тери тарăхтарман-ши вăл мана?!. Эпĕ тунă ĕçе яланах тиркетчĕ, пĕр ĕç çинчен уйăхшар мăкăртатса çӳретчĕ.

— Вăл çапса амантри-мĕн аллуна? — тесе ыйтрĕ пĕр ачи, часрах пĕлесшĕн пулса.

— Çук, ачам. Ман карчăк вăл енчен пит аван, хĕрĕх çул пурăнса та вăл мана пӳрнипе тексе курман, — терĕм.

— Мĕн пулнă-ха тата санăн аллуна? — тесе харăссăн ыйтрĕç ачасем.

— Çавăн историйĕ çинчен калатăп та. Вăл çав карчăкпа кĕвенте пирки пуçланса кайрĕ. Пĕрре вăл пысăк витресемпе шыв ăсма кайнă та кĕвентене вăтаранах хуçса тавраннă.

— Çтаппан, хуçăлман кĕвенте илсе пар-ха? — тесе минретме тытăнчĕ карчăк.

Вăл мăкăртатса çӳренинчен йăлтах аптăраса çитрĕм, юриех Тунти пасарне кайса çĕнĕ кĕвенте илсе патăм карчăка.

— Карчăк, текех ан хуç кĕвентене, — терĕм. Манăн карчăк кĕвентене çавăркаласа пăхрĕ те айăпне часах тупрĕ.

— Куçусем тепĕр пасара каймарĕç пулĕ-çке кĕвенте илнĕ чух?! — тесе ятлаçса илчĕ те, çĕнĕ кĕвенте варринчен хуçăлма пуçланине кăтартса пачĕ.

Тытса пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм. Пасарта илнĕ чух чип-чиперехчĕ, киле çитнĕ çĕре хуçăлма пуçланă иккен. Çав хушăрах хам: Çĕрпӳ пасарнех каймалла çав кĕвенте илме, вăл пасарти кĕвентесене кĕнеке çинче те ырласа çырнăччĕ, — тесе шутлатăп.

— Ну, карчăк, ан ятла. Çитес шăматкун иксĕмĕр Çĕрпӳ пасарне кайăпăр та хăвна мĕнли килĕшет, çавна суйласа илĕн, — тетĕп.

Манăн карчăк савăнсах кайрĕ.

Анчах шăматкун çитесси икĕ кун çеç тăрса юлнă пулин те, аран-аран кĕтсе илтĕмĕр Çĕрпӳ пасарне.

Çĕрпӳ пирĕнтен инçе — вунсакăр километр. Çитменнине тата хĕлĕн кунĕ те кĕске. Çавăнпа эпир пасара тул çутăличченех тухса кайрăмăр.

Вăл кун чăтма çук сивĕччĕ. Манăн çуна тупанĕсем колхозри кахалсем пек юрласа пыраççĕ. Пĕр ултă километр çеç кайрăмăр, лаша хар-р-т! туса илчĕ те тап чарăнчĕ.

— Мĕн пулчĕ-ши капла? — тесе тăлăп çухави ăшне чиксе пытарнă пуçа кăларса пăхрăм.

Манăн лаша умĕнче пĕр выçă кашкăр лара парать. Хăй çăварне карса пăрахнă та, лашана кăна мар, хама та тăлăпĕ мĕнĕпех хыпса-çăтса ярасшăн туйăнать.

— Пăрăн, çул пар! — тесе кăшкăратăп кашкăра. Анчах вăл мана илтсен те илтмĕш пулса, хăй вырăнĕнчен хăнк та сикмест.

Хăвăрах пĕлетĕр, эпĕ кашкăрсене пайтах тыт-

нă, çавăнпа вĕсенчен пĕртте хăрамастăмччĕ. Анчах çак кашкăртан çапах та хăрарăм вара. Вăл çăварне татах хытă карса пăрахрĕ те ман паталлах пыма пуçларĕ. Пĕччен нимĕн тума аптăранипе хампа юнашар ларакан карчăка чавсинчен тĕртсе систертĕм.

— Карчăк, умра выçă кашкăр ларать. Çăварне хам кĕрсе каям-и е сана пăрахса парам?—тетĕп.

Манăн карчăк хăранипе шартах сикрĕ. Халиччен кашкăр курманскер, куççулĕпех йĕме пуçларĕ.

— Çтаппан, ху та ан кĕр, мана та пăрахса ан пар,—тет карчăк.

Эпĕ кашкăр тĕл пулассине пĕлмен. Кăна пĕлнĕ пулсан, икĕ кĕпçеллĕ пăшала çуна çинех хурса тухмаллаччĕ-мĕн, вара кашкăра пĕрре пенипех вĕлерсе илсе каяттăм.

Анчах çакăн пек инкек пулсан, манăн пуçа калама çук ăслă шухăшсем пырса кĕреççĕ. Эпĕ текех кăшкăрса та тăмарăм, çуна çинчен антăм та, тӳрех кашкăр патнелле утрăм, хӳринчен çавăрса тытса çуна çумне çапса вĕлерес терĕм. Патнех пырса тăтăм, кашкăр çаплах манран хăрамасть. Какуй хăрама! Çăварне карса пăрахрĕ те, хам патах сиксе ларчĕ, хăй татах хăрушланса кайрĕ.

Эпĕ текех хăрамарăм, кашкăр патнех пытăм та унăн карса пăрахнă çăварĕ ăшнелле пăхрăм. Çăварĕ калама çук пысăк. Унта эпĕ кăна мар, хамăн аллăм та, тăлăп çаннине тавăрмасăрах, кĕрсе кайма пултарать.

— Ара, кăна мăшкăлама парас мар-ха, сылтăм алла çăварне чиксе ярам та, чĕлхинчен çавăрса тытам, — терĕм.

Манăн ăслă пуç кунта та хама улталамарĕ. Эпĕ, çанăна тавăрмасăрах, сылтăм алла кашкăр çăварне чиксе лартрăм, пĕр самантрах унăн чĕлхине ывăç тавра çавăрса ярса тытрăм. Вăл кашкăр çĕрĕпе выçă ўлесе çўренĕ иккен, çавăнпа унăн чĕлхи те типсех кайнă пулнă. Вăл маншăн калама çук аван пулчĕ, мĕншĕн тесен унăн типсе кайнă чĕлхине çавăрса тытма та меллĕ пулчĕ.

— Çтаппан пичче, санăн аллуна кашкăр çыртса амантри-мĕн? — тесе тĕлĕнсе ыйтрĕ пĕр ачи.

— Çук. Вăл манăн алла çыртма пултараймарĕ. Ара, эпĕ тăлăп çаннине тавăрман вĕт-ха, манăн тăлăпĕ питĕ хулăн, ăна кашкăр шăлĕ мар, упа шăлĕ те шăтарас çук, — тетĕп çаксене.

— Апла пулсан, ăçта аманнă-ха санăн сылтăм аллу? — тесе ыйтрĕç вĕсем пĕр харăс.

— Хамăн аллăм аманнин историйĕ тин çеç пуçланать-ха, — терĕм те сăмаха каллех малалла калама пуçларăм.

Çапла пулин те ачасем ывăннă темерĕç, манăн сăмаха тата тимлĕрех итлеме пуçларĕç.

Çапла эпĕ кашкăр чĕлхине ывăç тавра çавăрса тытрăм та, алла шаларан та шаларах чиксе пытăм. Манăн кашкăр вилнĕ пекех кăвакарса çитрĕ, урисемпе те тапкаланайми пулчĕ. Çĕрпĕве çитиччен ывăнĕ тесе, кашкăра çуна çине хампа юнашарах лартрăм.



Сылтăм алла кашкăр çăварне чиксе лартрăм, пĕр
самантрах унăн чĕлхине çавăрса ярса тытрăм.

— Çтаппан, пĕтрĕн вĕт! — тет карчăк, хăраса ӳксе. — Пăх-ха, аллуна пĕтĕмпех хыпса янă, чăлах пулса юлатăн вĕт, — тет карчăк.

— Карчăк, ан кулян, ыр кашкăрĕ питĕ усалли пулмарĕ, хама пĕтĕмпех хыпса ямарĕ-ха, — тетĕп.

— Чăлах пулса юлатăн-çке, Çтаппан! Хам та ватăлса çитетĕп... Мĕнле пурăнăпăр-ха вара?... — тесе кулянма пуçларĕ карчăк.

— Кулянма кирлĕ мар, карчăк. Алла татсах илнĕ пулсан, Çĕрпӳри больницăна кĕрсе çĕнĕ алă ларттарса тухатăп. Халĕ доктăрсем ăсталансах çитрĕç вĕт: пĕр алли татăлсан, ун вырăнне пĕр самантрах тепĕр алă лартса яраççĕ, — тесе йăпататăп карчăка.

Çакна илтсен, манăн карчăк савăнсах кайрĕ, Çĕрпĕве часрах çитес тесе, лашана хытăрах хăвалама пуçларĕ вăл. Эпĕ кашкăр çине пăхса пыратăп. Вăл куçĕсене ӳпнелле çавăрса пăрахнă та, çăварĕнчен шап-шур кăпăк кăларса пырать.

— Вилсе кайĕ ку, хăямат, — тетĕп.

Кашкăрне хĕрхенсе алла пăртак кăларма та шутлатăп, анчах вăл хама măйран пăвса илесрен хăратăп, мĕншĕн тесен кашкăрсем пит усал, вĕсем хăйсене хĕрхеннине те пĕлмеççĕ. Вĕсем, çуна çине лартсан та, май пулсан, пăвса антарма та хатĕр, вара хăвăн çуну çинчех кашкăр măшкăлĕ пулса вилетĕн.

Çакна асра тытса эпĕ алла чĕрне хури тăрăшшĕ те кăлармарăм. Манăн кашкăр, хăйне сывлама питĕ хĕн пулин те, пурпĕрех вилмерĕ. Ка-

куй унта вилме, пасара пыракан ҫынсене курнипе куҫӗсемпе ҫисе ярас пек пӑхма пуҫларӗ. Май пулсан, вӑл вӗсене ҫавӑнтах хыпса-ҫӑтса ярӗччӗ.

Ҫӗрпӳне лӑпах тул ҫутӑлнӑ ҫӗре ҫитрӗмӗр. Вӑл кун уяр пулнипе пасар ирех пухӑнса ҫитнӗ, таҫтанах сарӑлса выртать.

Лапшу Ҫтаппанӗнчен пӗтӗм таврари халӑх тӗлӗнтӗр тесе, арӑма пасар варрипе тухса каймa хушрӑм. Пасар патне ҫеҫ ҫитрӗмӗр, мӗнпур пек халӑх самантрах ик еннелле сирӗлсе тӑчӗ, — мана тухса каймашкӑн сарлака та такӑр ҫул пулса тӑчӗ. Вӑл ҫулпа лаша та савӑнса ҫӑмӑллӑн утрӗ.

Халӑх манран пӗҫҫисене ҫапсах тӗлӗнет, ҫав хушӑрах паттӑртараххисем ҫуна патне пырса ҫапла ыйтаҫҫӗ:

— Епле тытма пултартӑн-ха ку кашкӑра чӗрӗллех? — теҫҫӗ.

— Тӗлӗнмелли нимӗн те ҫук унта. Кашкӑрсем те, упасем пекех, пыл ҫиме юратаҫҫӗ вӗт. Кашкӑра чӗрӗллех тытас тетӗр пулсан, аллусене пыл сӗрӗр те хире ҫеҫ тухса вырӑр, выҫӑ кашкӑр пырсанах пыл сӗрнӗ аллуна хыпса ӗмме пуҫлӗ, эсир вара ҫавӑнтах чӗлхинчен ҫавӑрса тытӑр, — тетӗп.

— Пултаратӑн ҫав ӗнтӗ, Лапшу Ҫтаппанӗ! — тесе тӗлӗнсе юлчӗ пасарти халӑх.

Пасар витӗр тухсанах эпӗ сунарҫӑсен кантурне пырса кӗтӗм. Ҫав вӑхӑтра пирӗн кантурта председатель пӗр пӗччен ларатчӗ. Вӑл манӑн алӑ-

ри чӗрӗ кашкăра курсанах месерле шанк! кайса ӳкрӗ.

— Хăрама кирлӗ мар, Кирилл Вунихватевич, — тетӗп ҫакна.

Кирилл Вунихватевич ури ҫине тăчӗ те, чӗтӗре-чӗтӗре мана ҫапла ятлаҫма пуҫларӗ:

— Ҫтаппан Петровчă! Мӗншӗн-ха чӗрӗллех тытса килтӗн?.. Кам вӗлерӗ ӗнтӗ санăн кашкăрна?..

Ҫав самантрах пирӗн кантур умӗпе пăшалне ҫакса пӗр сунарҫă иртсе пыратчӗ. Кирилл Вунихватевич курах кайрӗ ҫак сунарҫа, ăна кантăкран шаккаса кантура кӗме чӗнчӗ.

— Халех, хам куҫ умӗнчех персе вӗлерӗр ҫак кашкăра! — тесе вăл манăн алăри чӗрӗ кашкăр ҫине тӗллесе кăтартрӗ. Лешӗ вара ăна-кăна та шутламарӗ пулас, пăшалӗпе кашкăр хырăмӗнчен тӗллерӗ те — пан! тутарчӗ.

Манăн алла ҫăтăр тутарса хытă чӗпӗтсе илнӗ пек туйăнчӗ. Эпӗ самантрах алла туртса кăлартăм — аларан юн палкаса юхать. Тинех пӗлтӗм: кашкăра хырăмӗнчен тӗллесе пенӗ пульă унăн ҫăварне чиксе янă ал витӗрех тухса кайнă иккен.

— Акă ăҫта аманчӗ манăн сылтăм аллăм, — тесе пӗтертӗм эпӗ хамăн халлапа.

Ачасем ăна питех юратса итлерӗҫ.

— Сан пата татах килетпӗр, Ҫтаппан пичче, пире татах ҫакнашкал халлапсем каласа пар, — терӗҫ те вӗсем килӗсене тухса вӗҫтерчӗҫ.

---

## Пĕр упашăнах виçĕ талăк йывăç тăрринче сывăртăм.

Ĕлĕкхи вăхăтра пирĕн таврара упасем пит нумай пулнă. Ямаш вăрманне кайсан, вĕсене унта кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех курма пулатчĕ.

Çапла эпĕ хамăн ĕмĕрте пайтах упа тытса куртăм. Пирвайхи упана хам вунпилĕк çулта чухнех тытрăм. Вăл упа калама çук пысăкчĕ, унăн какайĕ те лăпах вуникĕ пăт туртрĕ. Ăна вара хĕл каçичченех çисе пурăнтăм.

Çакăн хыççăн эпĕ упасене кăна тытма пуçларăм. Çулсерен вăтăршар упаран кая мар тытакан пултăм, виç-тăватă çултах пур упасене те тытса пĕтертĕм. Унтанпа пирĕн ял çĕрĕ çине мар, Ямаш вăрманне те нихăçан та упа ури пусса курман. Юлашки упана эпĕ Çĕпĕрте — тайгара тытрăм. Вăл акă епле пулчĕ.

Манăн аслă ывăл Çĕпĕрте, тайга варринчи ялта, учительте пурăнатчĕ. Темиçе çул хушши вăл мана хăй патне пырса курма чĕнсе çырусем ячĕ. Кĕрхи ĕçсене туса пĕтертĕм те ывăл патне тухса кайрăм. Унта куян, тилĕ, кашкăр, упа нумаййине малтанах пĕлсе, эпĕ хампа пĕрле икĕ кĕпçеллĕ пăшал, пĕр михĕ тар, икĕ пăта яхăнах

вĕтĕ пулькă тата юратнă йыттăма — Шашкăна илсе кайрăм.

Поездпа тăватă кун кайнă хыççăн, пиллĕкĕмĕш кунне ывăл патне çитрĕм. Пĕр кун пурăнатăп, иккĕ... виççĕмĕш кунĕнче манăн сунара пит каяс килекен пулчĕ.

— Атте, — тет ывăл. — Асту, ку тайга пит пысăк, инçетелле кайса ан çухал.

— Темĕн пек пысăк пулсан та пĕр кунта çаврăнса тухатăп, — тетĕп.

Вĕтĕ пулькăпа аврăланă икĕ кĕпçеллĕ пăшала çакрăм, пиçиххи хушшине пĕчĕк пуртă хĕстертĕм, Шашкăна ертсе тайгана тухса утрăм.

Эсир тайга мĕнлине пĕлместĕр пуль-ха? Çавăнпа сире вăл мĕнли çинчен те каласа парам. Тайга калама çук пысăк вăрман, унăн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Унта темĕн тĕрлĕ йывăç та ӳсет, вĕсен турачĕсем пит çăра: çӳлелле пăхсан, пĕлĕт татăкĕ курăнмасть. Ӳнтах асар-писер хăрушă çырмасемпе каçса каяйми шурлăхсем те пур.

Нумаях та каймарăм, эпĕ çавнашкал çырма хĕрринех пырса тухрăм. Аялалла пăхрăм — çырман тĕпĕ те курăнмасть. Татах тинкерсе пăхрăм — манран çич-сакăр утăмра кăна пысăк упа лара парать! Хăй çилпе хуçăлса аннă йывăç тункати çумне тăнă та темскер аппаланать.

— Мĕн хăтланать-ши ку упа? — тесе татах тинкеререх пăхрăм.

Упа иккен йывăç чĕлпĕкĕсене хăй еннелле туртса илет те, сасартăк калла ярать — йывăç




Манран ҫич-сакӑр утӑмра кӑна пысӑк упа лара парать!

чĕлпĕкĕсем сĕрме купăс хĕлĕхĕсем пек илемлĕн янраса калла пырса çапăнаççĕ.

— Ак тамаша! — тетĕп. — Упасен те ăсĕ пурмĕн, çынсем пекех музыка итлеме юратаççĕ, — тесе тĕлĕнсе тăратăп. — Путех ку чи ăслă упа пулĕ, — терĕм те ăна пăшалпа та пеме шутламарăм, лартăр савăнса тесе малалла утма тытăнтăм.

— Хам, хам, хам! — тесе илтĕнсе кайрĕ Шашкă сасси.

Эпĕ самантрах хыçалалла çаврăнса пăхрăм. Манăн Шашкă чĕрĕп тупнă та ура тапсах вĕрсе тăрать.

— Чарăн, — тесе Шашкăна пӳрнепе юнаса илтĕм.

Анчах Шашкă мана пĕрре те ăнланмарĕ, пушшех хытă вĕрме тытăнчĕ.

— Мĕншĕн илсе тухрăм-ха кăна, упа курсан мана хăй айне пĕтĕрсе чикет вĕт, — тетĕп.

Чăнах та, Шашкă сассине илтсе, упа мана курах кайрĕ, çиленсе пăхрĕ те урисемпе юнама пуçларĕ.

— Мĕн тăвас ку упана? — тетĕп. — Пăшалпа перес — çав тери ăслă упана вĕлерме те шел, вĕлерсен те киле çĕклесе çитереймĕп, — тетĕп.

Çапах та упана çаплипех хăварас килмерĕ — вĕлермех шутларăм. Пĕрре пенипех вилмĕ тесе тата тем пулĕ те тем килĕ тесе, пиçиххи хушшинчи пуртта кăлартăм.

— Ăçтан перес-ха кăна, — тетĕп.

Шутласа тăтăм-тăтăм та чĕринчен тĕллесе хап-

латтартăм. Манăн упа ача пек çухăрса ячĕ те хам паталла ыткăнма пуçларĕ. Хăранипе сехрем хăпса тухатчĕ пулĕ.

— Ăçта кĕрсе каяс ку хăяматран, — тетĕп. — Шашках пĕтерчĕ, вăл пулман пулсан, упа та курмастчĕ. Мĕншĕн Шашкăна илсе тухрăм-ха? — тесе кулянатăп.

Шашки тата мана пăрахса хăварса таçта тарса пытанчĕ. Вот епле телейлĕ вăл! Ура тăваттă мар, тăваттă пулнă пулсан, эпĕ те Шашкă пекех тараттăмччĕ, тепĕр кĕпçинчен персе упине те вĕлереттĕмччĕ.

Çапла шутласа тăнă вăхăтрах упа ман патăма çывхарса çитме те пуçларĕ, хăй калама çук пысăк, пирĕн колхоз вăкăрĕ пекех çĕмĕрсе хăпарать.

Тепĕр минут тăнă пулсан, упа мана çавăнтах хăй айне тĕркелесе чикнĕ пулĕччĕ. Юрать манăн пуç хытă ĕçлет.

Ман çумрах çӳлĕ йывăç ларать. Эпĕ пĕр самантрах çав йывăç тăрне хăпарса лартăм. Унччен те пулмарĕ, упа та йывăç патне çитсе тăчĕ, мана татах çиленчĕ пулас — каллех урисемпе юнама пуçларĕ.

— Халĕ ĕнтĕ тытаймастăн мана, — тетĕп çакна.

Çав вăхăтрах хам пĕр турачĕ çине лайăх майланса лартăм та, упана чĕри тĕлĕнчен тĕллесе иккĕмĕш кĕпçинчен кĕрслеттертĕм.

Упа çапах та вилмерĕ, мана татах çиленсе çитрĕ, йывăçа ыталаса илчĕ те, çын пекех хăвăрт

хăпарма пуçларĕ. Эпĕ хăрасах кайрăм, нимĕн тума аптăранипе:

— Шашкă! Шашкă!.. — тесе кăшкăрса ятăм. Шашкă çавăнтах пулнă иккен. Вăл хăр-р! тесе упан кĕске хӳринчен çыртса илчĕ.

Ӳркенчĕк упа мĕшĕлтетсе калла çаврăнса пăхрĕ, манăн Шашкăна курах кайрĕ, хăямат. Вăл ман пата хăпарма пăрахсах Шашкăна хăвалама пуçларĕ.

Шашкă калама çук хытă чупать, ăна упа мар, куян та хăваласа çитес çук. Çавăнпа упа та ытла инçех каймарĕ, каллех ман пата хăпарма пуçларĕ.

— Шашкă! Шашкă!.. — тесе кăшкăртăм йытта иккĕмĕш хут.

Вăл чупса çитрĕ те упана татах хӳринчен ярса илчĕ, ура тапса калла туртма пуçларĕ. Упа хӳри хытах ыратрĕ пулас: вăл ман пата хăпармасăрах Шашкăна таçта çитиех хăваласа кайрĕ.

Эпĕ çав вăхăтра çĕре анса малтан манса хăварнă пуртта илтĕм, хам çинçерех йывăç çине хăпарса лартăм, хăпарнă май йывăçăн пур тураттине те иртсе пытăм.

Анчах упа каллех çаврăнса çитрĕ. Вăл тӳрех эпĕ малтан хăпарса ларнă йывăç патне пычĕ, мана пăхма пуçларĕ. Эпĕ тепĕр йывăç çинче ларнине курах кайрĕ. Тарăхса çитнипе вăл каллех ман пата хăпарма пуçларĕ, — йывăçăн турачĕсене иртнĕ пулсан та, çынран та аван хăпарать.

Эпĕ нимĕн тума аптăранипе виççĕмĕш хут




Упана чĕри тĕлĕнчен тĕллесе петĕм.

Шашкăна чĕнсе пăхрăм. Вăл кăлтăрмач пекех кусса çитрĕ те, упана татах хўринчен çыртса илчĕ.

Анчах упа калла анмарĕ, ман пата хăпарма пуçларĕ. Пĕччен мар, хăйĕн хўринчен çакăннă Шашкăна та хăйпе пĕрле çĕклесе хăпарать.

Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Упасем пĕрре те эпĕ шутланă пек мар иккен. Вĕсем калама çук вăйлă: вĕсем манăн Шашкăна та йывăç тăрне çĕклесе хăпарма пултараççĕ-мĕн.

Хăвăрах пĕлетĕр, эпĕ ун пек инкек килсен, аптăраса туса тăмастăп. Пуртта илтĕм те хам пата хăпарса çитнĕ упан малти ури çине лач! лартрăм. Упа ури татăлса çĕре ўкрĕ. Унăн хыççăн упи хăй те çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ, манăн Шашкă кăшт çеç упа айне пулса вилетчĕ, аран-аран пĕр еннелле пăрăнса хăтăлчĕ.

Çакăн хыççăн упа, мана тарăхса çитнипе, эпĕ хăпарса ларнă йывăçа кăклама пуçларĕ. Виççĕ чавать те пĕр тымарне туртса кăларать, татах виççĕ чàвать те тепĕр тымарне туртса кăларать.

— Мĕн тăвас кунпала?—тетĕп.

Çав самантрах пăшала икĕ кĕпçине те авăрласа умлăн-хыçлăн упа тутинчен тĕллесе петĕм. Упа тутинчен пур еннелле те юн сирпĕнме пуçларĕ, çывăхран пăхса ларакан Шашкăна хĕп-хĕрлĕ юн турĕ. Татах пăшалăн икĕ кĕпçине те авăрласа упана каллех тутинчен тĕллесе перетĕп. Юлашкинчен, упа ача пекех йĕме пуçларĕ.

— Э-э-э,—тетĕп,—сана тутаран пемелле пул-



Пуртта илтĕм те хам пата хăпарса çитнĕ упан малти ури çине лач! лартрăм.

нă иккен. Кăна пĕлнĕ пулсан, малтан тытнă упасене те тутаранах персе тытмаллаччĕ, — тесе ларатăп.

Анчах манăн савăнни ахалех пулчĕ. Тутинчи юнне çулласа тасатрĕ те, упа татах йывăçа кăклама пуçларĕ. Кăклать те йывăçа çапса пăхать, манăн йывăç хăрах еннеллех сулăнса кайрĕ.

— Тинех упа мăшкăлĕ пулса вилме тӳр килчĕ-мĕн, — тетĕп.

Алсем чĕтреме пуçларĕç, пăшала та авăрлаймастăп. Нимĕн тума аптăранă енне Шашкăна чĕнсе пăхатăп. Анчах капла та усси çук, Шашкăна çыртмашкăн упан хӳри те тăрса юлман.

Çитменнине Шашкă хăй те, ман пекех хăраса ӳксе, упа патне пыма шикленет.

Çапла пулсан та пăшала икĕ кĕпçине те авăрласа умлăн-хыçлăн упа çине петĕм. Упа месерле кайса ӳкрĕ. Эпĕ савăнсах çитрĕм те, татах упа çинелле перетĕп. Манăн упа вырăнтан та хускалайми пулчĕ. Хам çапах та йывăç çинчен анма хăратăп. Мана ĕлĕк хамăр ялти ват сунарçă Кăтра Карачăм çапла каласа панăччĕ:

— Çтаппан шăллăм! асту, упасем, кутăнланма юратаççĕ, юриех вилĕш пулса выртаççĕ те çывăха пырсанах пусса ӳкереççĕ, — тенĕччĕ.

Çакна аса илсе эпĕ те йывăç çинчен анмарăм. Питех ыйăх килнипе йывăçĕ çумне çыхăнса ларсах çывăртăм.

Çапла эпĕ темиçе кун çывăрнă (ăна хам та пĕлместĕп), пĕр ирпе вăранах кайрăм. Упа çап-

лах пĕр хусканмасăр выртать, хам çапах çĕре анма хăратăп.

— Нивушлĕ çын таврашĕ çӳремест ку тăрăхра, — тесе шухăшлатăп.

Пулăшу ыйтса кăшкăрма пуçларăм. Инçетрен пăшал пенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ те пăшалпа персе хам ăçтине пĕлтертĕм. Вăхăт нумай та иртмерĕ, ман телее пула, часах пĕр сунарçă çитсе тăчĕ.

— Сыхлан! — тетĕп çакна, — асту, патне ан пыр, упасем юриех вилĕш пулса выртаççĕ, хăйсем патне çитсенех çынна пусса ӳкереççĕ, — тетĕп.

Çак сунарçă пăшалне тытрĕ те упана тĕллесе хаплаттарчĕ. Манăн упа мĕшĕлт те тумарĕ. Пăхрăм та тĕлĕнмелле япала куртăм: манăн Шашкă, шăнасран пулас, упа хăлхи ăшне кĕрсе çывăрнă та, пăшал сассине илтсенех сиксе тăрса, çак сунарçă патнелле чупса кайрĕ.

— Ку чăнласах вилнĕ-мĕн, — тесе тин йывăç çинчен çĕре антăм.

Хам витĕр шăнса кайнă, урасем пĕр-пĕринчен иртсе çĕре те пусаймаççĕ. Аран-аран уткаласа пытăм та, пуртă тăршипе упана çамкинчен çапса пăхрăм. Упа чăнласах вилнĕ иккен, пуртă тăршипе çапсан та мĕшĕлт те сикмерĕ.

— Итле ĕнтĕ çав Кăтра Карачăма, — тетĕп. — Хăй ялта чи ватă сунарçă тесе мухтанатчĕ, упана мĕнле тытмаллине те пĕлмест иккен, пулаççĕ çав тĕнчере суеç сунарçăсем, — тетĕп.

Ман пата пынӑ сунарҫӑ хам ывӑл вӗрентекен ялтанах пулнӑ. Мана вӑл ҫакӑн пек тӗлӗнмелле хыпар каласа пачӗ:

— Сана ывӑлу тайгара аташса ҫӳрет е упасем тытса вӗлерчӗҫ пулӗ тесе шутлать. Эсӗ тухса кайнӑранпа лӑпах виҫ кун иртрӗ, эсӗ таврӑнманнине кура ялти пур сунарҫӑсем те тайгана сана шырама тухрӑмӑр, — тет.

Ҫакна илтсен эпӗ тӗлӗнсех кайрӑм. Виҫӗ кун та виҫӗ ҫӗр йывӑҫ ҫинче ҫыхӑнса ҫывӑрнӑ иккен.

— Капла манӑн хырӑм та выҫсах кайнӑ пулӗ, — терӗм те хырӑма тытса пӑхрӑм. Ман хырӑм чӑнах та пуш-пушах тӑрса юлнӑ.

Витӗр шӑннипе кӑшт ҫеҫ вилсе каяттӑм. Ыр, Шашкӑна илсе тухрӑм. Ӑна илсе тухман пулсан, упине те тытас ҫукчӗ. Ҫав упан какайӗпе ҫуне ҫинипе ҫеҫ шӑнса пӑсӑласран хӑтӑлса юлтӑм.



## Ҫӑка хӑвӑлӗнче ларсах арӑслана чӗрӗлле тытрӑм.

Эсир пӗри те арӑслан курман. Вӑл мӗнлине эсир кӗнекесем тӑрӑх ҫеҫ пӗлетӗр. Анчах арӑслансене кӗнекесем ҫинче питех те пӗчӗккӗ туса кӑтартаҫҫӗ. Чӑннипе вӗсем калама ҫук пысӑк тата питех те вӑйлӑ. Пӗр арӑслан икӗ ҫулти вӑкӑра ҫурӑмӗ ҫине ҫавӑрса хурсах ҫӳлӗ хӳме урлӑ сиксе каҫма пултарать теҫҫӗ. Ҫавӑн пек вӑйлӑ пулсан та, эпӗ ӑна тытса курнӑ.

Хӑвӑрах пӗлетӗр, пирӗн таврара арӑслансем ҫук. Вӗсем ӑшӑ енче ҫеҫ пурӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа эсир манран:

— Ҫтаппан пичче, эсӗ арӑслана ӑшӑ енне кайса тытрӑн-и?—тесе те ыйтма пултаратӑр.

Эпӗ ун пек ҫӗре кайма та шутламан. Ҫавнашкалах пуҫра та манӑн арӑслан тытас шухӑш пулман. Ҫапах та эпӗ ӑна тытса куртӑм, вӑл акӑ мӗнле пулчӗ.

Пӗр ҫулхине пирӗн ял ҫыннисем ращара кассa ҫуракан катка хӑмисене станца турттарса тӑма Пахчал ялӗнчи Уртиван Кузьмич патне тара кӗрӗшрӗҫ. Пӗрре манӑн кӳршӗ лашине илсе пӗччен икӗ лавпа катка хӑми тиесе каймалла пулчӗ.

Станца çитсе лавсене пушатрăм, лашасене утă парса хам та апатланма лартăм. Унччен те пулмарĕ, пĕтĕм халăх тин çеç çитсе чарăннă поезд патнелле чупрĕ.

— Мĕн пулчĕ-ши капла? Мĕн пирки халăх пăлханса кайрĕ-ха? — тесе вĕсем хыççăн кайрăм.

Пĕр вагонĕ çинче, тимĕртен тунă пысăк читлĕхре, калама çук пысăк арăслан ларать. Хăй çилхине пĕр тăратса, пĕр вырттарса каллĕ-маллĕ утса çӳрет, шăлĕсене йĕрсе пирĕн çине çисе ярас пек пăхать.

Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Малтанах манăн пуçа çакăн пек шухăш пырса кĕчĕ: „Мĕнле сунарçă тытма пултарнă-ши ăна чĕрĕллех?..“ Пĕр енчен, тĕнчере ун пек сунарçă çук пек туйăнчĕ. Тепĕр енчен, çак арăслан пĕрре те тимĕр читлĕх ăшне хăй ирĕккĕн кĕрсе ларас çук. Паллах, ăна сунарçах тытнă. Анчах ăçта тата мĕн ятлă сунарçă тытнă-ши ăна?

Манăн хамăн та çавăн пек сунарçă пулса арăслансене чĕрĕллех тытас килчĕ. Анчах пирĕн патăрта арăслансем çук, акă мĕн пăшăрхантарать мана.

Çапла шутласа тăнă вăхăтра вагон патне иккĕн икĕ пăта яхăн какай йăтса пычĕç.

— Çакăн чухлех çиет-и вара? — тесе тĕлĕнсе ыйтрĕç çынсем.

— Кунсерен икшер пăт çиет, — тет какай йăтса пынисенчен пĕри.

Вăл самантрах пĕр вĕçне ункăллă тунă турчка пек вăрăм тимĕр илсе читлĕхри арăслана тепĕр



Çак самантра читлĕхри арăслан таçта тухса тарчĕ.

пуçнелле хăвалама пуçларĕ. Анчах арăслан хăй вырăнĕнчен яхăнне те тапранасшăн мар, вăл хăйĕн хӳрипе тимĕр вĕçĕнчи ункăран тирсе илчĕ те çынна хăй патнелле туртма пуçларĕ.

Çакна курсан çынсем хăрасах кайрĕç. Вĕсем пурте, çынна пулăшас тесе, тимĕртен тытса арăслана каялла туртма тытăнчĕç. Арăслан çапах та вырăнтан тапранмасть, тимĕртен туртсан та, çапса лартнă вĕрен пăти пек, хăй вырăнĕнчех тăрать.

Çапла аппаланса тăнипе хамăр та сисмен, поездăн тапранса каймалли вăхăчĕ те çывхарсах çитрĕ. Какай пама пынă çынсем питех те тарăхрĕç. Пĕри турчка пек тимĕрне пăрахрĕ те, читлĕх алăкне уçса какайне пăрахса пама тăчĕ. Арăслан çав самантрах алăкне ярса тытрĕ. Çынсем хăранипе шăй-шай кăшкăрашса илчĕç те пурте çĕре лăпчăнса ларчĕç. Çав самантра читлĕхри арăслан таçта тухса тарчĕ, вагон çинче пуш читлĕх кăна тăрса юлчĕ.

Вăл кун станцăра пасарччĕ. Читлĕхрен арăслан тухса тарнине илтсен, пасар пĕр самантрах саланса пĕтрĕ. Арăсланран хăраса кашниех пĕрер шăтăрнак кăлара-кăлара кайрĕç. Çапла мана валли пĕр шăтăрнак та хăвармарĕç.

Пурне те паллă, эпĕ çынсем пек шиклĕ мар. Шиклĕ пулсан та, мĕнех тăвайрăн-ха çав шăтăрнакпа? Унпа арăслана мар, пăсарана та çапса вĕлереймĕн. Çапла эпĕ, пĕр шăтăрнак илмесĕрех, киле пĕр хуйхă-суйхăсăр çитрĕм.

Çакăн хыççăн икĕ кун та иртмерĕ, арăслан каççерен вуншар, çирĕмшер сурăх пăвма пуçларĕ. Таврари çынсем сурăхĕсене çеç мар, пĕтĕм выльăхне-чĕрлĕхне юман витесене, чул нӳхреп-сене хупса усрама пуçларĕç. Анчах капла туни те пулăшмасть-мĕн. Арăслан кайран ĕнесене та-пăнма пуçларĕ, вара пĕтĕм халăх пысăк хуйха ӳкрĕ. Юлашкинчен çынсем:

— Каплах пулсан, пĕр выльăхсăр тăрса юлă-пăр, — тесе хуйхăрма пуçларĕç.

Нимĕн тума та çук, пур ялсенчи сунарçăсем те çак арăслана мĕнле тытасси çинчен канашла-ма тытăнчĕç. Славаш сунарçисем ялти хĕрарăм-сен сӳсне пĕтĕмпех пухса таната яваççĕ: арăсла-на танатапа тытатпăр, теççĕ. Мăнçут сунарçисем шартлама сивĕрех уя тарăн та пысăк шăтăк чав-ма пуçларĕç.

— Кунта вăкăр яратпăр та выçă арăслан хăех килсе анса каять, — теççĕ.

Пахчал сунарçисем тата Ямаш вăрманне чĕрт-се çунтарса ярасшăн:

— Вара унта пурăнакан арăслан та çунса ви-лет, — теççĕ вĕсем.

Эпĕ халиччен пĕрре те арăслан тытса курман. Çавăнпа-и тен, манăн канашсене пĕр çын та ит-лемерĕ.

— Санран пулать-и арăслан тытасси, куянсене тытма лайăхрах вĕрен-ха, — терĕç мана çынсем.

Çапла кулни мана питех те пăшăрхантарчĕ. Манăн епле пулсан та вĕсене хамăн вăя кăтар-

тас килчĕ. Вăйĕ вара чăнласах пурччĕ манăн. Урасене икшер пăт пуканĕсем çыхса ярса виçшер километр каяттăм. Çăл куçĕ майлах тапса тăратчĕ манăн вăй.

— Вăл вăй ман пĕр арăслана çеç мар, вунă арăслана та тытма çитĕ-ха, — тесе пĕр ирпе тухрăм та утрăм Ямаш вăрманне.

Вăрманта лăпах кăнтăрлаччен утса çӳрерĕм — ниçта та арăслан йĕрне тĕл пулмарăм.

— Путех ку арăслан эпĕ кунта пурăнни çинчен сиссе таçталла тарнă пулĕ, — тесе те шухăшлатăп аптăранă енне.

Вăрманта пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнменнине пула тата хамăн пуç мĕн шутлани тĕрĕсех пулаканччĕ тесе, киле кайма шут тытрăм. Анчах ик-виçĕ утăм та тумарăм, арăслан пĕтĕм вăрмана чĕтретсе уласа ячĕ. Манăн çӳç-пуç вирелле тăрса кайрĕ, пуçри çĕлĕк чутах хывăнса ӳкетчĕ.

Пăхатăп, арăслан ман паталлах утса килет, читлĕхрен тухса тарнă арăсланах. Эпĕ текех хăраса тăмарăм, чĕринчен тĕллесе пĕрре пенипех йăвалантарса антарăп терĕм те пăшала ярса тытрăм, анчах алăсем чĕтренипе пăшалне те перейменĕм.

Арăслан, хăйне пеме хатĕрленнине пĕлсе-и тен, татах хăрушланса кайрĕ те ман çинех сиксе ӳкрĕ. Çак самантра пуç ăслă шухăш шухăшласа кăларман пулсан, арăслан ури айĕнче пашалу пекех лапчăнса юлаттăмччĕ пулĕ: ыр манăн пуç калама çук ăслă шухăш шухăшласа кăларчĕ. Манăн



Эпĕ, каялла çаврăнса пăхмасăрах, çăка хăвăлне кĕрсе лартăм.

çумрах хăвăл çăка ларать. Эпĕ, каялла çаврăнса пăхмасăрах, çав çăка хăвăлне кĕрсе лартăм. Çав самантрах арăслан та çăка патне çитсе тăчĕ.

Анчах вăл темĕн пек хăтлансан та ман пата кĕреймерĕ. Юлашкинчен, вăл çăка хăвăлĕ ăшне сăмсине чиксе ячĕ. Эпĕ текех хăраса тăмарăм, мĕн вăй çитнĕ таран пăшал кучĕпе унăн сăмсинчен çапрăм.

Арăслана хытах лекрĕ, унăн сăмсинчен кĕрех юн тапса тухрĕ, хăй çапах та мана пăрахса каймасть. Юнне юхтарса пĕтерчĕ те арăслан ман пата кĕме пысăк шăтăк шырама пуçларĕ. Çăка тавралла темиçе хут çаврăнса та, вăл хăйне тивĕçлĕ шăтăк тупаймарĕ. Нимĕн тума аптăранă енне эпĕ кĕрсе кайнă шăтăк умне пырса тăчĕ, çăка хăвăлне хӳрине чиксе ячĕ, мана хӳрипе çаклатса туртса кăларас терĕ пулмалла.

Анчах эпĕ хăраса тăмарăм, арăслан хӳринчен çавăрса тытрăм та питĕ хытă кăшкăрса ятăм. Арăслан хăранипе унталла та кунталла сикме пуçларĕ. Эпĕ савăнсах çитрĕм, хытăран та хытă кăшкăрма тытăнтăм. Арăслан, ниçта кайса кĕме пĕлменнипе, пур вăйĕпе сикме пикенчĕ. Çапла вăл эпĕ кĕрсе ларнă çăкана хăвăлĕ-мĕнĕпех кăкласа кăларчĕ те, мана çăкипе пĕрлех таçталла сĕтĕрсе каять.

— Ара, ку арăслана хамăр ялах илсе каяс, — терĕм.

Анчах вăл пирĕн ял тĕлне пĕлмест, çавăнпа манăн унпа пит нумай аппаланмалла пулчĕ. Мал-



Вăрманта ниçта та çакланмасăр тухнă çăка уй хапхи çумне çакланса ларчĕ.

5. Сунарçă халлапĕсем.

тан эпĕ çăка хăвăлĕнче ларсах унăн тăрринчи чи пысăк туратне хуçса илтĕм, унтан çав туратпа çапа-çапах арăслана хамăр яла каймалли çула кăтартса пытăм.

Яла лăпах кас пулас умĕн çитрĕм. Анчах яла кĕрес умĕн пĕр инкек пулчĕ. Вăрманта ниçта та çакланмасăр тухнă çăка уй хапхи çумне çакланса ларчĕ. Çакланнине вĕçертсе ярас тесе, темле те аппаланса пăхрăм, анчах çăкана ниепле те вĕçертеймерĕм. Çапла манăн çăка хăвăлĕнче лăпах тепĕр ирччен кĕтсе выртмалла пулчĕ.

Тул çутăлса çитнĕ çĕре уй хапхи патне пĕтĕм ял халăхĕ пухăнчĕ.

— Кам унта, çăка хăвăлĕнче?! — тесе тĕлĕнсе ыйтаççĕ манран çынсем.

— Эпĕ, Лапшу Çтаппанĕ, — тетĕп çаксене.

Ял халăхĕ манран тĕлĕнсех кайрĕ.

— Мĕнле тытрăн та, мĕнле тытрăн ку арăслана? — тесе минретеççĕ çаксем.

Эпĕ вĕсене арăслана мĕнле тытни çинчен каласа памарăм. Хам çăка хăвăлĕнче ларсах вĕсемпе кĕске пуху туса иртертĕм, вăл пуху председателĕ хамах пултăм. Унта эпир пĕр ыйту — арăслана ăçта хупасси çинчен сӳтсе яврăмăр. Анчах вăл ыйту пит вăрăма тăсăлчĕ. Вĕçкĕн Ваççа пăшалне йăтса тухрĕ те:

— Ниçта та хӳпма кирлĕ мар, халех персе вĕлеретĕп те Лапшу Çтаппанне те вилĕмрен хăтаратăп, — тет.

— Хăвăн ухмах пуçупа лăпăртатса тăма та на-

măс, — тесен çеç вăл чарăнса ларчĕ, унпа вара пĕр çын та килĕшмерĕ.

Арăслана ăçта хупмалли çинчен хамăнах каласа памалла пулчĕ. Самантрах эпĕ Хриссан Мĕкĕтин чултан тунă нӳхрепĕ пурри çинчен аса илтĕм, кунта хупнă арăслана кайран тимĕр читлĕх ăшне те кăларма аван пулать, терĕм. Хамăн шухăша каласа патăм.

Ман шухăшпа пурте килĕшрĕç. Çынсем пĕр самантрах пуртăсемпе пăчкăсем илсе тухрĕç те çакланса ларнă çăкана татса вĕçертсе ячĕç, хăйсем Хриссан Мĕкĕтин нӳхреп ани çăварне уçса хума чупрĕç.

Нӳхреп патне çитсен ывăннă арăслан савăнсах кайрĕ, тӳрех нӳхрепе сикрĕ. Эпĕ унăн хӳрине ятăм та çăка хăвăлĕнчен сиксе тухрăм, нӳхреп çăварне хупса лайăх питĕрсе лартрăм. Çав каçах икĕ çынна станца ятăм, унта вĕсене çапла калама хушрăм:

— Ямаш ялĕнчи чаплă сунарçă, Лапшу Çтаппанĕ, виçĕмкун читлĕхрен тухса тарнă арăслана чĕрĕллех тытнă, арăсланне ыранах пырса илсе кайăр! — тесе калăр терĕм.

Çак арăслана чĕрĕллех тытнă хыççăн мана пĕтĕм тĕнче пĕлсе çитрĕ. Çапла эпĕ пĕр арăслан тытнипех тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулса тăтăм.

## Саккăр персех пĕр лав пăчăр тытрăм.

Эпĕ кунсерен темиçешер çыру илсе тăратăп. Ман пата тĕрлĕ вырăнсенчен тĕрлĕ чĕлхесемпе çырусем ярса, манăн халлапсене пур çĕрте те ватти-вĕттипех кăмăлласа вулани çинчен пĕлтерессĕ. Акă паян эпĕ Тукаль ялĕнчи шкулта вĕренекен ачасенчен çакăн пек çыру илтĕм:

„*Хисеплĕ Çтаппан пичче*!

*Эпир Сирĕн халлапусене питех юратса вулатпăр, Сире вĕсемшĕн чĕререн тав туса тата нумай пурăнма сывлăх сунатпăр.*

*Çтаппан пичче! Эсир тĕнчери чи паллă та чаплă сунарçă, Эсир пайтах тискер кайăк тытнă. Эпир Сирĕнтен çакна ыйтса пĕлесшĕн:— Эсир, Çтаппан пичче, кăвакалсем, пăчăрсем тытса курман-и? Тытнă пулсан, вĕсене епле тытни çинчен те çырăр!*

*Эсир пире кăмăл тăвасса шансах тăратпăр.*

СИРЕ ЮРАТАКАН АЧАСЕМ".

Чăнахах, эпĕ кăвакал та, пăчăр та, ăсан та пайтах тытса курнă, вĕсене тытас тĕлĕшпе те эпĕ чи чаплă сунарçă шутланнă. Манран хамăр таврари сунарçăсем кăна мар, Çĕпĕрти сунарçăсем те шалтах тĕлĕнетчĕç.

Пурне те паллă, Çĕпĕрте эпĕ темиçе хут та пулса курнă. Кашни каймассерен эпĕ унти сунарçăсене мĕнпе те пулсан тĕлĕнтерсе хăвараттăм. Уйрăмăнах манран унта пăчăрсене ăста тытнинчен тĕлĕнетчĕç. Çак тĕлĕшпе эпĕ хам кăна мар, манăн карчăк та чапа тухрĕ. Анчах вăл хăй тĕллĕн пĕр пăчăр та тытса курайман-ха.

Пăчăр тенĕрен, сире вĕсене епле тытни çинчен каласа парам.

Выçлăх çулхине Çĕпĕре кайса пĕр çул хушши эпĕ тайга хĕрринче ларакан ялта пурăнтăм. Вăл тайгара кедр йывăççисем чылайччĕ, унтах тата темĕн тĕрлĕ тискер кайăксем те пурăнатчĕç. Кĕркунне пулсан, ял çыннисем лавĕ-лавĕпе кедр мăйри турттаратчĕç, хĕллехи вăхăтра сунарта çӳресе пакшасем, тилĕсем, упасем тытатчĕç.

Çакна кура, кĕркунне çитсен манăн та кедр мăйри çиес килчĕ, карчăк та кунсерен кедр мăйри татса пар, тесе минретме пуçларĕ.

Анчах эпĕ халиччен нихçан та кедр мăйри татса курман. Çавăнпа мăйăр татма карчăка яма шутларăм. Вăл тата мансăр пуçне килтен те тухмастăп, тет. Çапла вара ирĕксĕрех хамăн та каймалла пулчĕ.

Пурте пĕлеççĕ, эпир карчăкпа иксĕмĕр нумая хапсăнакан çынсем мар. Çавăнпа эпир кедр мăйри татма, çынсем пек лавпа мар, хутаççемпех тухса кайрăмăр.

Тайга ялпа юнашарах пулнăран унта тул çутăличченех çитрĕмĕр, хутаççене çакса ятăмăр та

пĕчĕк тĕмсем çинче мăйăр шырама пуçларăмăр. Анчах пирĕн алла пĕр мăйăр та кĕмест. Çынсем татса пĕтернĕ пулĕ тесе, эпир шаларан-шала кĕрсе кайрăмăр.

— Мĕн шыратăр, Çтаппан пичче?—тесе ыйтрĕ пире хирĕç пулнă çын.

— Кедр мăйри татма килтĕмĕр-ха,—тетĕп.

— Ара, эсĕ кедр йывăççине те палламастăн-çке!—тесе çак çын манран ахăлтатса кулма пуçларĕ, юлашкинчен, пĕр пысăк йывăç çине кăтартрĕ те:

— Ав кедр йывăççи!—терĕ.

Карчăкпа иксĕмĕр те çав йывăç патне пырса тăтăмăр. Йывăçĕ калама çук çӳлĕ; тăрринелле пăхсан, çĕлĕк хывăнса ӳкмелле. Пĕртте ĕненес-сĕм килмест, пĕртте кедр йывăççи пек туйăнмасть. Пĕр курланки те пулсан татăлса анмĕ-ши тесе, пурт тăршипе çапрăм йывăça. Анчах ун çинчен пĕр курланкă та анмарĕ.

— Çтаппан, Çтаппан!—тет манăн карчăк.— Пăх-ха, пăх çӳлелле!

Çӳлелле пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм. Йывăçăн лапсăркка турачĕсем çинчен пĕр кĕтӳ кайăк вĕççе тухса кайрĕ. Хăйсем кăвакарчăнсем пысăкĕш, вĕсем пекех кăвак.

— Мĕнле кайăксем-ши кусем?—тетĕп.

Вĕсем ларнă йывăç патне кушак пек йăпшăнса пытăм та, куççене сиктермесĕр пăхма тытăнтăм. Хăйсем калама çук самăрланса кайнă, пӳрне хулăнăш сар çăвĕ тĕкĕсем витĕрех куранса тăрать.

Манăн куç-пуç алчăрхаса кайрĕ, пыр ярăнса илчĕ, пĕр кайăкне тытса тутанса пăхас килчĕ.

Çак шухăша пула кедр мăйрине те татма манса кайнă, арăмпа иксĕмĕр те киле пуш хутаçсене çеç йăтса таврăнтăмăр, ялти çынсем пирĕнтен кулма пуçларĕç.

— Э-э, Çтаппан, мăйăр татма та пĕлместĕнçке эсĕ!—теççĕ çынсем.

— Пастай-ха, курăр-ха Çтаппан камне,—тесе эпĕ пĕрре те кӳренмерĕм.—Мăйăр, тупнă тĕлĕнмелле япала?! Мĕнех вăл мăйăр татасси?—тетĕп.

Анчах хам чăнласах мăйăрне мĕнле татмаллине те пĕлместĕп.

Çав каçпала ман пата кӳршĕсем пырса ларчĕç. Вĕсем калаçнинчен эпĕ çакна пĕлтĕм: вăл çул кедр мăйри пит ăнса пулнă иккен, пăчăрсем çимесен, кĕлет тулли мăйăр татса хума май пур.

Тинех ăнланса илтĕм. Эпĕ пырса пуртă тăршипе шакканă йывăç—кедр мăйри йывăççи, унтан вĕççе тухнă кайăксем—пăчăрсем пулнă иккен.

— Вăт ухмах халăх, мĕн тăваççĕ-ши çав вĕт мăйăрпа, тытасчĕ пăчăрĕсене,—тетĕп.

Çапла эпĕ, кедр мăйрине татас вырăнне, епле пулсан та пăчăрсенех тытма шутларăм. Пăчăрсем питех чее тенĕрен манăн вĕсене мĕнле тытмалли çинчен лăпах пĕр çĕркаçа шутламалла пулчĕ.

— Çтаппан, мĕншĕн çывăрмастăн ара?—тет карчăк эпĕ çывăрмасăр шутласа выртнине курса.

— Хăнкăласем çыртаççĕ, çывăрма та памаççĕ,—тетĕп карчăка.

Автансем виççĕмĕш хут авăтсан, манăн пуçа калама çук ăслă шухăш пырса кĕчĕ. Савăннипе сиксе тăрса ташлассăм килчĕ, анчах канлĕ çывăракан карчăка вăратас мар, терĕм.

Хам çав самантрах тула тухса лаша кўлтĕм, çурăм хыçне икĕ кĕпçеллĕ пăшал çакрăм, пилĕк тавра авăрланă патрунсем чиксе лартнă сунарçă пиçиххине çыхрăм, пўрте кĕрсе карчăка вăратма тытăнтăм.

— Карчăк, тăратăн пулĕ? Шăналăк тата виçĕ михĕ хатĕрле, пăчăрсем тытма кайăпăр,—тетĕп.

Манăн карчăк аран-аран вăранчĕ, хăй пăчăрсем мĕн иккенне те пĕлмест.

— Намăс мар-и сана, карчăк? Чаплă сунарçă арăмĕ пулсан та пăчăр мĕнне пĕлместĕн!—тетĕп.

Манăн карчăк намăсланмарĕ, тул çутăлманнине курчĕ те:

— Тул çутăлмасăр яхăнне те пымастăп,—тет.

— Карчăк, пăчăрсем тытма каятпăр, пăчăрсене тул çутăличчен тытма аван,—тетĕп.

Çапла никрес карчăка аран-аран каласа килĕштертĕм. Апат та çимерĕмĕр, тул çутăлнă çутăлманах тайгана тухса кайрăмăр.

Тул çутăлса çитменнипе хам каллех кедр йывăççине паллаймастăп. Çавăнпа манăн шаларан та шала кĕрсе ĕнер тупнă йывăçах шыраса тупмалла пулчĕ. Çапла тул та янках çутăлса çитрĕ. Карчăка пуртă парса тăршипе кедр йывăçне хытă çапма хушрăм, хам тепĕр айккинчен пăчăрсем вĕçсе тухнине кĕтсе тăтăм.




Пӑчӑрсен ушкӑнӗ ҫине умлӑн-хыҫлӑн персе ятӑм — пӗр кӗтӳ пӑчӑртан ҫурри ытла ҫӗре персе анчӗ.

Халт! тутарса çапрĕ карчăк. Çав самантрах кедр йывăççи çинчен пĕр кĕтӳ пăчăр вĕçсе тухрĕ. Пăчăрсен ушкăнĕ çине умлăн-хыçлăн персе ятăм—пĕр кĕтӳ пăчăртан çурри ытла çĕре персе анчĕ. Карчăкпа иксĕмĕр те пухрăмăр, лăпах çĕр те икĕ пăчăр пулчĕ.

Çывăхрах тепĕр кедр йывăççи ларать. Карчăка пуртă тăршипе çаптаратăп та хам каллех вĕçсе тухакан пăчăрсем çине умлăн-хыçлăн икĕ хут перетĕп, пăчăрсем татах та нумай персе анчĕç. Пухса шутларăмăр та лăпах икĕ çĕр те пĕр пăчăр пулчĕ. Кашни пăчăрĕ пĕрер килограмм пулсан та, тăваттă персех вуникĕ пăт какай антартăм-çке эпĕ, тесе тĕлĕнетĕп. Капла эпĕ тайгари пăчăрсене те веçех тытса пĕтерĕп, тетĕп.

Çапла манăн лав та часах тулса ларчĕ. Карчăк киле кайма минретме тытăнчĕ. Аран-аран килĕштерсе карчăка виççĕмĕш кедр йывăççине çапма хушрăм.

Халт! тутарса çапрĕ карчăк тарăхса çитнипе. Те ытлашши хытă çапнăран, пăчăрсем çăмăр пĕлĕчĕ пек хуп-хура вĕçсе тухрĕç. Иккĕ пенипех икĕ çĕр аллă ытла пăчăр ӳкертĕм. Пăхатăп, пăчăрсен шучĕ пĕрре те чакман. Йăпăр-япăр пăшалăн икĕ кĕпçине те авăрланă икĕ патрун кĕртсе лартатăп та, ниçталла та вĕçсе кайма ĕлкĕреймен пăчăрсен ушкăнĕ çине перетĕп. Татах темĕн чухлĕ пăчăр анчĕ. Ура пусмалăх вырăн юлмарĕ, ăçта пăхнă унта пăчăр выртать.

Пăчăрсене пурне те пухса пĕтертĕмĕр те лав



Аран-аран киле çитрĕмĕр, лаша та, хамăр та чăм шыва ӳкрĕмĕр.

çине тиеме пуçларăмăр. Пăшалпа патрунсене, лав çине хурсан ӳксе юлĕç тесе, урапа тĕпне хурса хăвартăм.

Манăн лав, кĕлте тиенĕ лав пекех, пысăкланса кайрĕ, килтен илсе тухнă шăналăкпа михĕсем пăчăрсем çине витме те çитмерĕç. Çапла манăн пăчăрсене нимĕнпе витмесĕрех турттарса тавăрăнмалла пулчĕ.

Анчах манăн лаша урапана вырăнтан та тапратаймасть. Ирĕксĕрех карчăкпа иксĕмĕрĕн те урапана хыçалтан тĕртсе лашана пулăшса пымалла пулчĕ. Çапла хăтланкаласа аран-аран киле çитрĕмĕр, лаша та, хамăр та чăм шыва ӳкрĕмĕр.

Ман пата кӳршĕсем кăна мар, пĕтĕм ял пухăнчĕ.

— Епле тытрăн та, епле тытрăн çакăн чухлĕ пăчăр?—тесе тĕлĕнсе ыйтаççĕ манран.

— Мĕн тĕлĕнмелли пур унта,—тетĕп.—Кедр йывăççине пуртă тăршипе çапатăп та, антранă пăчăрсем пăтă пек персе анаççĕ, карчăкпа иксĕмĕр аран-аран пухса ĕлкĕретпĕр,—тетĕп.

Çынсем пĕççисене шарт çапсах тĕлĕнеççĕ манран.

— Чăнах çапла тытрăн-и?—тесе ыйтаççĕ, ĕненмен пек пулса.

— Чăнах пулмасăр, кам суять сире, ара манăн пăшал та çук-çке,—тетĕп.—Тăваттăн каймаллаччĕ, вара тата тепĕр лав пухса килме пулатчĕ,—тетĕп çаксене.

— Мĕнле апла?—тесе ыйтрĕç çынсем.

— Мĕн мĕнли? Карчăкпа пухма та ĕлкĕрей-

местпĕр, ӳкнĕ пăчăрсенчен çурри ытла тăрса тарчĕç,— тетĕп.

Çынсем мана ĕненсех пăрахрĕç, лашисене кӳлчĕç те арăмĕсене тата ачи-пăчисене лартсах пурте тайгана çĕмĕрттерчĕç.

Эпир карчăкпа иксĕмĕр пĕр лав пăчăра çăмласа пилĕк мăн катка пăчăр какайĕ тăварласа лартрăмăр.

Кăнтăрла çитнĕ тĕле хайхи çынсем пурте пĕр пăчăр тытмасăрах пушăлла халтăртаттарса таврăнчĕç.

Эпĕ вăл вăхăтра чӳрече умĕнче тутлă пăчăр какайне çисе ларатăп. Пăчăр какайĕн тутлă шăрши пĕтĕм урама тапса тухнă. Çынсем, хырăмĕсем пит выçнипе пулас, çак тутлă шăрша чарăна-чарăна тăрса шăршлаççĕ.

— Çав кирлĕ сире, ӳлĕм Лапшу Çтаппанĕнчен ан кулнă пултăр,— терĕм эпĕ.



**Пахчал кооперативне вăлтасем килмен пулсан, кăвакал та тытас çукчĕ.**

Пĕрре мана хамăр ялти ват сунарçă Кăтра Карачăм урамра тĕл пулчĕ те:

— Çтаппан шăллăм! Эх, кăвакал какайĕ тутлă та иккен! Тӳррипех калатăп: эсĕ тутанса пăхсан, куянсем çине çаврăнса та пăхмастăнччĕ,—терĕ.

Кăтра Карачăм суйма юратнăран, вăл хăй ĕмĕрĕнче пĕр кăвакал та тытса курманран, эпĕ унтан:

— Хăвах çисе куртăн-и вара?—тесе ыйтрăм.

— Хам çиессе çимен те, анчах манăн асатте пĕр улпут çинине курнă,—терĕ Кăтра Карачăм.

— Çын çинине курни мĕн вăл, хамăрăн тытса тутанса пăхасчĕ,—терĕм эпĕ.

Çавăнтах манăн пуçа кăвакалсем тытас шухăш пырса кĕчĕ. Анчах хам вĕсене мĕнле тытмаллине пĕлместĕп.

— Камран ыйтса пĕлес-ха?—тесе шутлама тытăнтăм.

Пĕр енчен, мана, чапа тухнă сунарçăна, çавăн çинчен ыйтса пĕлме те намăс. Тепĕр енчен, пирĕн ялта кăвакалсем тытма пĕлекен сунарçăсем те çукчĕ. Тытма мар, хăйсен ĕмĕрĕнче кăвакал курнă сунарçă та çукчĕ пирĕн ялта.

Çапла кăвакал какайне тутанса пăхас шухăш кунран-кунах ӳссе пычĕ. Юлашкинчен, эпĕ куянсем çине çаврăнса та пăхми пултăм.

Кĕркунне çитрĕ. Кăвакалсем кĕркунне пит самăрланса каяççĕ тенине илтрĕм те, пĕр ирпе Ямаш вăрманне тухса утрăм. Кăвакалсем шыва юратнăран, эпĕ те тӳрех Патин шурлăхĕ патне çул тытрăм, унта лăпах кăнтăрлапа çитрĕм. Шурлăх патĕнче вун-вуникĕ сунарçă çӳрет, хăйсем пĕри те пĕр кăвакал та тытайман. Вĕсемпе пĕрлех ялти ват сунарçă Кăтра Карачăм та çӳрет.

— Ĕçсем епле-ха?—тесе ыйтатăп çаксенчен.

— Япăхрах çав,—теççĕ.—Кăвакалсем нумай, анчах персе ӳкерсен шыва кĕрсе илме шиклеҫетпĕр, шăнса пăсăлма та пулать... Çавăнпа пеместпĕр те,—теççĕ çаксем.

— Çапла çав,—терĕм эпĕ те, вĕсем майлă пулса.—Алса пысăкĕш кăвакалшăн никамăн та шăнса вилес килмест ĕнтĕ,—терĕм.

Çанталăк ун чухне чăнласах сивĕччĕ вара. Паян-ыран пур шыв шăнса ларас пек сивĕ тăратчĕ. Çакна пула эпĕ сунарçăсене:

— Кăвакалсем тармаççĕ-ха, эпĕ уншăн пĕртте хуйхăрмастăп. Анчах кĕр вăрăма тăсăлса кайрĕ, темĕн амакшăн часрах шăнтса лартмасть,—тетĕп.

— Шăнтса лартсан, вара пĕр кăвакалне те кураймăн,—тет мана Кăтра Карачăм.

— Ара, эсĕ, ватăлнă пулсан та, кăвакалсене мĕнле тытмаллине пĕлместĕн-çке!—тетĕп çакна.

— Санран ыйтсах тăмăпăр-ха,—тет вăл мана.

— Кăвакалсене шыв шăнса ларсан тытма аван. Манăн асатте яланах çапла тытатчĕ, лавĕ-лавĕпе кăвакал тиесе таврăнатчĕ, – терĕм.

— Епле апла?! — тесе тĕлĕнсе кайрĕç çак сунарçăсем.

— Тĕлĕнмелли нимĕн те çук. Ара, кăвакалсем яланах шыв çинче çывăраççĕ, шăнтса лартсан пурте пăр çумне çыпçăнса лараççĕ, — терĕм.

Сунарçăсем мана ĕненсех пăрахрĕç. Ĕненмесен те май килмест: ара эпĕ таврари чи паллă та чаплă сунарçă-çке.

Çапла вĕсем савăнса пурте киле май уттарчĕç, эпĕ шурлăх патĕнче пĕр пĕччен тăрса юлтăм. Кăвакалсем курасран хам çăка хăвăлĕ ăшне кĕрсе лартăм. Сивĕ пулнăран çавăнтах виçĕ çĕклем хăрăк турат пухса кăвать чĕртсе ятăм. Манăн çăка хăвăлĕ мунча пекех ăшăнса çитрĕ, эпĕ çири тумтире хывса сартăм та пĕр кана лайăх çывăрса илтĕм. Хам питех кулăшла тĕлĕк куртăм. Шывсем шăнса ларнă пек, малтан курнă сунарçăсем лашисене кӳлсе, пĕр-пĕринпе ăмăртсах, Патин шурлăхĕ патнелле сиккипе чуптараççĕ пек. Хăйсен ураписем шăн çĕр çинче аслати пек халтăртатса пыраççĕ пек, хам та çав сасăпах вăранса кайрăм.

Пăхатăп та тĕлĕнсех каятăп. Çав сунарçăсем шуйлантарса янă кăвакалсем пурте шурлăха пухăннă—шыв çинче аллаппи пысăкĕш те вырăн юлман: ăçта пăхнă унта кăвакал çӳрет. Хăйсем пит самăрланса çитнĕ, çапах та апатшăн çунаççĕ.

Пĕр кăвакалĕ пысăк шапана урлăлла хыпнă та, çăтса ярасшăн тапаçланать, теприсем çавăнтах унăн çăварĕнчи апатне хыпса илесшĕн çунса çӳреççĕ.

— Эхе!—терĕм.—Эсир пит выçă, сире апат памалла-мĕн,—терĕм.

Çав самантрах ман пуçа никам шутласа кăлараймн ăслă шухăш пырса кĕчĕ. Пĕрреччен эпĕ пĕр сунарçă кăвакалсене сысна çăвĕ татăкĕпех нумай тытни çинчен илтнĕччĕ. Анчах унăн кăвакалĕсем сысна çăвне ăмсанса хыпнипех çăвĕ çумне çыхнă çип çине тирĕне-тирĕне ларнă. Кунти кăвакалсем пĕртте апла тирĕнсе ларас пек туйăнмарĕç. Çапла манăн каллех тепĕр ăслă шухăш шухăшласа кăлармалла пулчĕ.

Эпĕ хамăн пуçа чи çывăх юлташран та ытларах шанатăп, мĕншĕн тесен вăл мана нихçан та улталаман. Вăл мана темĕнле хăрушă инкекрен те пĕр самантрах хăтăлмалли мел тупса парать. Çакна аса илсе эпĕ тӳрех киле май утрăм, кăвакалсене мĕнле тытмалли ăслă меле те вăлах шутласа кăларĕ-ха, терĕм.

Хĕвел анса ларас умĕн эпĕ Пахчал ялне çитрĕм. Пахчал кооперативĕ уçă, халăх лăках кĕрсе тулнă. Мĕнле те пулсан лайăх тавар илсе килнĕ пулĕ тесе, эпĕ те шалалла кĕрсе кайрăм.

— Суту тума пĕлместĕр! Вăлтасене хĕле кĕрес умĕн илсе килмелле-и вара?!—тесе вăрçать пĕри.

— Тĕрĕс калатăн, халь кам илтĕр вĕсене,—тет тепри.

— Мĕнле вăлтасем?—тесе ыйтрăм.

— Мĕнле вăлтасем?.. Пулă тытмаллисем,—теç-çĕ мана.

Эпĕ халиччен нихçан та вăлта курманччĕ, çавăнпа кунта килнĕ май вăлтасене те курсах каяс терĕм. Мана пĕр çыхă вăлта тыттарчĕç.

— Вăлтисене те илме пĕлмен. Çак, пысăкскер-сене, пулă епле хыпма пултарĕ,—тет кĕреçе су-халлă çын.

Çак самантрах манăн пуç ăслă шухăш шухăш-ласа та кăларчĕ.

— Ара, ку вăлтасем çине сысна çăвĕ лартса Патин шурлăхĕнчи кăвакалсене пурне те тыта-тăп-çке эпĕ,—терĕм.

Çавăнтах вăлтасене илтĕм те килелле утрăм.

Манăн карчăкăн виçĕ мăн çăмха кĕр çиппи пурччĕ. Киле таврăнсанах эпĕ çав çиппе метр-шар тăршшĕ татса кашнинех сӳс тилхепе çине çыхрăм. Çапла эпĕ вунă тилхепе çине çыхса тух-рăм, кашни тилхепи çумĕнчех икшер çĕр çип пулчĕ. Çав çип вĕçĕсенчен вăлтасем çыхса ятăм, кашни вăлти çинех пĕрер татăк сысна çăвĕ тă-хăнтартăм. Вун тилхепине те Патин шурлăхне кайса ятăм.

Кашни вăлтинех пĕр кăвакал çакланасса эпĕ малтанах шанса тăтăм. Çавăнпа тилхеписене, кăвакалсем йăтса каясран, йывăççенчен çыха-çыха лартрăм.

Çапла эпĕ вунă тилхепе çинче икĕ пин вăлта хăвартăм. Пĕрер кăвакал çаклансан та икĕ пин




Икĕ çĕр кăвакал çав тери пысăк йывăçа тымарĕ-
мĕнĕпех кăкласа таçта вĕçсе кайнă.

кӑвакал пулать тесе, тата икӗ пин кӑвакала пӗр лавпа турттарса килме май ҫук тесе, тепӗр кун ирхине кӑвакалсем тиеме карчӑкпа иккӗн икӗ лавпа тухса кайрӑмӑр.

Мӗн шутлани тӗрӗсех пулчӗ: манӑн вӑлтасем ҫине кашнинех пӗрер кӑвакал ҫакланнӑ. Анчах, вунӑ тилхеперен пӗри ҫук. Тилхепине ҫыхнӑ йывӑҫӗ патне пытӑм—йывӑҫӗ те ҫук; икӗ ҫӗр кӑвакал ҫав тери пысӑк йывӑҫа тымарӗ-мӗнӗпех кӑкласа таҫта вӗҫсе кайнӑ. Тӗлӗнсех кайрӑм. Кӑвакалсем пӗртте эпӗ шутланӑ пек мар иккен: вӗсем калама ҫук вӑйлӑ. Анчах темӗнле вӑйлӑ пулсан та, вӗсем ҫав йывӑҫа инҫетех илсе каяйман пулнӑ.

Кӑвакалӗсене тытма ҫав тери ансат пулнӑ пулсан та, лавсем ҫине тиесе пӗтерме питех йывӑр пулчӗ. Кашни кӑвакалнех малтан ҫӗҫӗпе пусмалла пулчӗ, унсӑрӑн вӗсем хамӑра та лавсемпе пӗрлех ҫӗклесе таҫталла вӗҫсе кайӗҫ, терӗм.

Икӗ пин кӑвакала тасатса какайне каткасем ҫине тӑварласа лартиччен лӑпах виҫӗ кун иртрӗ. Тӑваттӑмӗш кунӗнче ҫанталӑк сивӗтрӗ, шывсем пӗр каҫрах шит хулӑмӗш шӑнса ларчӗҫ. Эпӗ ҫӑка хӑвӑлӗнче ҫывӑрса курнӑ тӗлӗк чӑн пулас япаланах пӗлтерчӗ. Шывсем шӑнса ларнӑ хыҫҫӑн Ямаш ялӗнчи сунарҫӑсемпе Кӑтра Карачӑм чӑнласах лашисене кӳлсе Патин шурлӑхӗ патне вӗҫтернӗ. Анчах вӗсем унта пӗр кӑвакал та курман. Эпӗ Ямаш вӑрманӗнчи кӑвакалсене пурне те хам тытса таврӑннӑ иккен.

## Хуркайăксене те лавĕ-лавĕпех тытаттăм.

Эсир хуркайăксен сассине илтнĕ пулсан та, хăйсене курман. Эсир вĕсене курма та пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсем пит çӳлтен вĕçсе каяççĕ.

Çапла пулсан та эпĕ хуркайăксене тытса курнă. Пĕрне кăна мар, ушкăнĕ-ушкăнĕпех, пĕрне тартмасăр тытнă.

Хуркайăксем кунта пурăнмаççĕ. Хăшĕсем— вĕсем çурçĕрти пăрлă тинĕссенче, теприсем тата кăнтăр енче пурăнаççĕ, теççĕ. Анчах çак суя халлапсене эпĕ пĕрне те ĕненместĕп, мĕншĕн тесен хуркайăксем ăçта пурăннине эпĕ хам та пĕлместĕп.

Маншăн çакă кăна паллă. Хуркайăксем çулсеренех пирĕн ял урлă çуркунне вĕçсе каяççĕ. Вĕсем пĕчченшерĕн мар, пĕр-пĕрин хыççăн карталанса, ушкăнпа, питĕ çӳлтен вĕçсе каяççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ, эсир вĕсен сассисене илтнĕ пулсан та, хăйсене патĕнчен курма пултарайман.

Çапла пĕр çулхине яланхи пекех çуркунне çитрĕ. Яланхи пекех пулсан та, вăл çуркунне хуркайăксем тĕлĕшĕпе ăраснарах пулчĕ: пирĕн ял çинчен кунсерен çирĕмшер те вăтăршар ушкăн

хуркайăк ирте-ирте каятчĕ. Пăхаттăмччĕ те шалтах тĕлĕнеттĕм:

— Мĕн чухлĕ какай манăн çăвара кĕмесĕр сая каять! — тесе юлаттăм.

Эпĕ кăна мар, ытти сунарçăсем те вĕсем çине питех ăмсанса ăшă куçпа пăхса юлатчĕç; пурин те вĕсене тытса тутанса пăхас килетчĕ. Хуркайăксен сассине илтсенех, пăшалĕсене йăтса тухатчĕç те, умлăн-хыçлăн пеме тытăнатчĕç. Анчах та ушкăн хуркайăкран пĕри те çĕре ӳкместчĕ.

Вĕçкĕн Ваççа, вĕсем питех çӳлтен вĕçсе кайнă пирки, пӳрчĕ тăррине е çӳлĕ йăмра çине хăпарса перетчĕ, хăй çапах та пĕрне те персе антараймастчĕ.

— Ваççа пăяхам, йăмра çине хăпарса периччен, санăн пĕлĕт тӳпине çитекен пусма тумаллаччĕ. Пусма çине хăпарса хуркайăксене те чĕрĕллех тыта-тыта анмаллаччĕ, — тесе кулатчĕç унтан кӳршĕ арăмĕсем.

Вĕçкĕн Ваççа вĕсене çиленсех çитетчĕ, сухалне çăварне çыртса пĕр чĕнмесĕр килне кĕрсе каятчĕ.

Хуркайăксене тытас шутпа пирĕн ял сунарçисем мĕн-мĕн хăтланса пăхмастчĕç-ши? Пĕрисем хире шăналăк тухса саратчĕç, унта сĕлĕ сапса кунĕ-кунĕпех хуркайăксем анасса кĕтсе выртатчĕç. Теприсем тата, хуркайăксем Ямаш вăрманĕнче пурăнаççĕ тесе, кунĕн-çĕрĕн унта вĕсен йăвисене шыраса çӳретчĕç.

Эпĕ вĕсем пек хисепсĕр сунарçă пулса кӳр-

шĕсемпе ял-йыша та култарман. Паллах, вĕсем пек айванла хăтланса, пĕр хуркайăкне те тытаймастăн.

Пурне те паллă, ун пек вăхăтсем çитсен, эпĕ хамăн пуç çине ытларах шанатăп, мĕншĕн тесен манăн пуçăм пурне те шухăшласа тупать. Анчах хам пулăшмасан, вăл та пĕр пĕччен нимĕн тума та пултараймасть. Çавăнпа эпĕ хам та хуркайăксене мĕнле тытасси çинчен шухăшлама тытăнтăм.

Малтанах çакна пĕлтĕм. Хуркайăксем ыраш калчи çиме юратаççĕ иккен. Вĕсем кăнтăрла пĕр канмасăр вĕçсе каяççĕ те, каçпала, çынсем лăпланса çитсен, ăçта та пулсан, айлăм та тӳрем е сăртлă вырăна ларса ыраш калчи çиеççĕ.

Пирĕн ял патĕнче çавнашкал вырăнсем икĕ тĕлте пур. Пĕри — Сармантей çучĕ текен сăртлă вырăн, тепри — Çавал шывĕн сулахай енчи улăхĕ. Çак вырăнсене иккĕшне те кайса пăхса килтĕм. Сармантей çутĕнче ыраш калчи питех начаррĕ, çавăнпа унта пĕр уйăх çимесĕр пуранна хуркайăк та анса ларассăн туйăнмарĕ. Çавал улăхĕнче пачах урăхла вара. Çавал шывĕ ейĕвĕ тухса ыраш калчисем нумай çĕрнĕ пулсан та, тĕллĕн-тĕллĕн кĕççе майлах хулăм та симĕс лараççĕ.

Çӳресен-çӳресен эпĕ çакăнта ăраснах симĕс ӳсекен пĕр пĕчĕк вырăн тупрăм. Патне пырса тăтăм та тĕлĕнсех кайрăм: ăçта пăхнă унта хуркайăк йĕррисем курăнаççĕ.

— Э-э, эсир кунта ларатăр иккен! — терĕм те, килелле уттартăм.

Çапла эпĕ хуркайăксем ларса апатланакан вырăна тупрăм. Манăн вĕсене мĕнле тытасси çинчен шухăшласа кăларасси кăна юлчĕ. Анчах шухăшлас ĕç — манăн ĕç мар, вăл — пуç ĕçĕ пулать, терĕм.

· — Ну, юратнă пуçăм! Эпĕ тăрăшса вĕсем ларса апатланакан вырăна тупрăм. Халĕ ĕнтĕ эсĕ ĕçле-ха, вĕсене мĕнле тытмалли меле шухăшласа туп-ха, — терĕм.

Пуç мана итлерĕ. Пĕр самантрах вăл пулă тытма тесе карчăк çыхса хатĕрленĕ сĕрекене аса илчĕ. Çав сĕрекене улăхри симĕс калча çине сарсан, калча çиме анакан хуркайăксем пурте майĕсемпе çак сĕреке çине тирĕнсе ларас пек туйăнчĕ.

Çак ăслă шухăш çинчен никама та пĕр сăмах каламарăм. Каç пулсанах сĕрекене çав симĕс калча çине кайса сарса хутăм. Майĕсемпе тирĕнсе ларнă хуркайăксем çĕклесе каясран, сĕрекене çĕр çине хытă çапса лартнă вĕрен пăтисенчен çыхаçыха лартрăм та киле таврăнтăм.

Çав каçхине пирĕн ял сунарçисем, Вĕçкĕн Ваççа патне пухăнса, хуркайăксене мĕнле тытасси çинчен сўтсе-явма пуçланă. Мĕн тума шутлаççĕши кусем тесе, эпĕ те çавăнта кайрăм. Вĕçкĕн Ваççа, намăса пĕлмесĕр, çаплах суеçтерет:

— Мĕнле тытмаллине пĕлетĕп,—тет çак.—Хуркайăксем кăнтăрла çеç çўлтен каяççĕ-мĕн, каçпа



Эпӗ ҫитнӗ вӑхӑтра хуркайӑксем ҫунаттисемпе ҫапкаланса ҫеҫ выртаҫҫӗ.

вěсем пит аялтан вěçеççě иккен, хире çеç тухса сыхласа лармалла,—тет Ваççа савăнса кайнипе.

Çакнашкал пустуй халлапсене итлесе ларнă хыççăн текех чăтса ларма пултараймарăм, эпě те сăмах хушрăм:

— Çěрле тухса ларсан, хăвна та хăйсемпе пěрле йăтса кайěç,—терěм Ваççана.

Вěçкěн Ваççа çиленсе çитнипе манпа тавлашса кайрě.

— Хăвна тěнчери чи чаплă сунарçă шутласан та, пěр хуркайăкне те тытаймастăн,—тесе тăрăхлама пуçларě манран.

— Ваççа пичче,—терěм ăна.—Халь тесен халě аллă хуркайăк чěрěлех тытса килсен, супăнь хăмпи пек çурăлса каймăн-ши?—терěм ăна.

Вěçкěн Ваççа пěр шуралса, пěр хěрелсе кайрě те:

— Хам лашанах кӳлсе паратăп, аллăшне мар, пěрне те тытса килейместěн,—тет мана.

Эпě килěшрěм. Вăл лаша кӳличчен шурăмпуçě те шуралса килчě. Хампа пěрле Ваççа ачи явса хатěрленě çăпата кантрисене илтěм те Çавал улăхне кайрăм.

Пуçăм мěн шутлани тěрěсех пулчě. Сěреке сарса хăварнă ыраш калчи çине пěр ушкăн хуркайăк аннă та калчана хыпалансах çинипе пурте мăйěсемпе сěреке çине тирěне-тирěне ларнă, пěр хуркайăкě те пуçне каялла кăларайман.

Эпě çитнě вăхăтра вěсем çунаттисемпе çапкаланса çеç выртаççě. Çěр çине çапса хăварнă ву-

нă пăтаран тăххăрăшне турта-турта кăларнă. Çапла вара хуркайăксем тирĕнсе ларнă манăн сĕреке пĕр пăта çинчех тытăнса тăнă. Ăна та туртса кăларнă пулсан, хуркайăксем сĕрекене те хăйсемпе пĕрле илсе кайнă пулĕччĕç, вара манăн Вĕçкĕн Ваççапа тавлашни те усăсăрах пулатчĕ.

Малтан эпĕ хуркайăксене кашнинех çуначĕсенчен çыха-çыха тухрăм, унтан лав çине тиерĕм. Шутларăм та тĕлĕнсех кайрăм, манăн сĕреке çине çитмĕл икĕ хуркайăк тирĕнсе ларнă пулнă.

Яла çитнĕ çĕре тул янках çутăлса кайрĕ. Çынсем, хуркайăксене мĕнле тытнине ан пĕлччĕр тесе, сĕрекене киле кĕрсе хутăм, унтан тин Вĕçкĕн Ваççа патне кайрăм. Манран сунарçăсем кăна мар, ялти пур çын та тĕлĕнчĕ.

Çакăн хыççăн эпĕ ирсерен пĕрер лав хуркайăк тиесе килеттĕм.



**Ямаш вăрманĕнчи ăсансене пурне те хам хыçран ертсе килтĕм.**

Мĕнле кăна тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем пурăнмастчĕç-ши Ямаш вăрманĕнче! Таврари пур ялсенчи сунарçăсем те унтан тухма та пĕлместчĕç. Кунĕн-çĕрĕн, хĕлĕн-çăвĕн Ямаш вăрманĕнче сулланса çӳретчĕç. Кун каçа пĕр куян тытмасан та, вĕсем уншăн пĕртте пăшăрханмастчĕç. Ăнсăртран, пĕр куянне лектерсен, çав куян тирне сутма тесех Çĕрпӳ пасарне каятчĕç.

Миçе мăшăр çăпата çĕтмен-ши, миçе пăт тар усăсăр персе сая яман-ши вăл сунарçăсем! Çакна темĕн пек пысăка вĕреннĕ çын та шутласа кăларас çук. Юлашкинчен, Ямаш вăрманне те çав тар тĕтĕмĕнчен кăвак сăн çапрĕ, вăрман хăйĕн ешĕл тумне çухатса, тĕссĕрленсе кăвакарса юлчĕ.

Анчах тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем çапах та вăл вăрмана юрататчĕç, унта вĕсем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех пурăнатчĕç. Уçтук варĕнчи чăтлăхра упасем йышлă çӳретчĕç, Уйпуç варĕ тилĕсен йăви пулса тăчĕ, Патин шурлăхĕнче кăвакалсем пĕлĕт пек вĕçсе çӳретчĕç.

Эпĕ вĕсене çулсерен хисепсĕр нумай тытса пурăнтăм. Çуркунне умĕн вăрманта пĕр кайăк

тĕсĕ те тăрса юлмастчĕ, çитес хĕлре сунара ăçта каяс-ха, тесе те час-час шутлаттăмччĕ.

Манăн телее, кĕркунне умĕн вĕсем каллех йышланса çитетчĕç, маншăн вара пĕтĕм тĕнче тепĕр майлă улшăнса кайнă пек туйăнатчĕ.

Тўррипех калатăп. Ямаш вăрманĕ пулман пулсан, эпĕ те чаплă та паллă сунарçă пулас çукчĕ. Ямаш вăрманĕнче эпĕ сăсар, тилĕ, кашкăр, упа хисепсĕр нумай тытрăм. Ямаш вăрманĕнчех эпĕ хамăр çĕршывра ĕмĕрне те пулман тискер кайăка—арăслана та тытрăм. Юлашкинчен, Ямаш вăрманĕнчех эпĕ ăсансем те тытма вĕрентĕм.

Ăсансем тенĕрен, сире вĕсене мĕнле тытни çинчен каласа парам.

Малтан эпĕ ăсан кайăк иккенне те пĕлмен. Ăна эпĕ, кăвакал пекех, шывра пурăнакан кайăк пулĕ тесе шутланă. Вăл вуçех урăхла кайăк иккен. Вăл шурлăхсенче мар, хурăнпа пилеш нумай ўсекен вырăнсенче пурăнма юратать, мĕншĕн тесен ăсан çуркунне хурăн кăчки, кĕркунне пилеш çиме юратать.

Çакна лайăх сăнаса пĕлнĕ хыççăн, манăн пуç вĕсене мĕнле тытмалли меле часах шутласа кăларчĕ. Эпĕ çуркунне çитсенех Ямаш вăрманне кайса, хурăнсемпе пилешсем нумай ўсекен вырăн шыраса тупрăм.

Çав вырăнта кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпех ăсансем тĕл пултăм. Анчах ун чухне вĕсем пит начарччĕ. Паллах, хурăн кăчки çинипе ăсансем мар, килти чăхсем те самăрланас çук. Çавăнпа эпĕ вĕсене

çуркунне мар, кĕркунне тытма шутласа хутăм. Кĕркунне вĕсем пиççе çитнĕ пилеш çинипе самăрланĕç тата кашниех пĕрер пусăм чĕпĕ кăларнипе хăйсен йышне те ӳстерĕç, терĕм.

Анчах кĕркуннене эпĕ аран-аран кĕтсе илтĕм. Пĕрреччен, кӳршĕ арăмĕсем Ямаш вăрманне милĕк касма тесе кайнă та, эпĕ шыраса тупнă вырăна çитсе кĕнĕ, унтан пĕр ăсан чĕппи тытса таврăннă.

Çав ăсан чĕппине вĕсем пурте пĕрле пĕçерсе çинĕ те, ăсан какайĕ питĕ тутлă пулни çинчен пĕтĕм таврана сăмах сарнă, çитменнине тата ăсан чĕппине хăш вырăнта тытни çинчен те каласа панă.

Çакăн хыççăн, пирĕн ялти сунарçăсем кăна мар, таврари мĕнпур сунарçăсем те кунсеренех Ямаш вăрманне ăсан тытма кая пуçларĕç. Ăсансем пит чее пулнипе çав сунарçăсем пĕри те пĕр ăсан тытаймарĕç. Çапла вĕсем кĕркуннеччченех Ямаш вăрманĕ тăрăх пĕр усăсăр сулланса çӳрерĕç.

Юлашкинчен, кĕркунне çитсен, ăсансем тытма кайрăм, тӳрех малтан шыраса тупнă вырăна пытăм. Анчах, кăнтăрлаччен çӳресен те, эпĕ пĕр ăсан та кураймарăм. Пĕрре киле каяс тесе, тепре каçченех юлса пăхас тесе шутлатăп. Çапах та пĕр килнĕ пек чухне каçченех юлса пăхас терĕм, хам ывăннипе аçампа пĕркенсех çывăрма выртрăм.

Темĕн чухлĕ çывăрнă, ăна хам та пĕлместĕп, каç-



Ман хыҫран карташ тулли ӑсан кӗрсе тулчӗ.

пала вăранах кайрăм, куççене уçса пăхрăм та шалтах тĕлĕнсе кайрăм. Ăсансем ниçта та кайман иккен, çавăнтах пурăнаççĕ. Кăнтăрла курăксем айне пытанса ларса, каçпа пилеш çиме тухнă пулнă. Хăйсем пит самăрăлса кайнă, пилеш çине те вĕçсе хăпараймаççĕ.

Эпĕ вĕсене пит шеллерĕм, сиксе тăтăм та пилеш татса пама пуçларăм. Ăсансем манран пĕртте шикленмеççĕ, татса панă пек пилеше çисе пĕтерсех пыраççĕ.

Çапла, пилеш çиесшĕн пулса, пĕр самантрах ман тавра шутласа кăлармалла мар нумай ăсан пухăнчĕ. Капла çитерсен, эпĕ сире виçĕ кунта та тăрантаймăп, терĕм те пĕр пилешне тĕпренех касса киле май утрăм. Ăсансем ман хыçран пилеш тавра пĕлĕт пек сырăнса пыраççĕ.

Киле лăпах тул çутăлас умĕн çитрĕм. Ман хыçран карташ тулли ăсан кĕрсе тулчĕ. Манăн вĕсене хупса лартмашкăн пысăк вите те çук. Мĕн тума çав териех нумай ертсе килтĕм-ха кусене, тетĕп. Хам, пĕччен нимĕн тума аптăранипе карчăка вăратрăм. Карчăкĕ тата, ыйăхран уçăлса çитменнипе пулас, мана ятлаçма пуçларĕ:

— Мĕн тума çав териех нумай ертсе килтĕн? Ăçтан илсе килнĕ, çавăнтах кайса яр!—тет карчăк.

— Карчăк, курмастăн-и-мĕн, ăсансем вĕт вĕсем,—тетĕп.

Манăн карчăк тин ăна кĕрсе çитрĕ. Пилешрен пĕр тураттине хуçса илчĕ те, ăсансене çуррине

яхăнах пӳрте йăхăрса кĕртрĕ, ыттисене вара кӳршĕсенчен шăналăксем пухса карташ варрине хӳтлĕхсем туса хупрăмăр.

Эпĕ, иккен, Ямаш вăрманĕнчи мĕнпур ăсансене хам хыçран ертсе таврăннă. Вăл ăсансене хĕлĕпе çисен те пĕтерейместĕм, пасара пайтах кайса сутрăм, нумайăшне кӳршĕсене патăм, аллăшне хĕл каçарма хăвартăм. Карчăк вĕсене чăхсемпе юнашар кашта çине лартма вĕрентрĕ.

Çав аллă ăсан çулсеренех аллă пусăм чĕпĕ кăлараççĕ. Çапла эпĕ халĕ хам килте усракан ăсан какайĕпех калама çук аван пурăнатăп. Хăçан та пулсан, тен, эсир Ямаш ялне пырса тухăр. Ун чухне вара ман пата кĕмесĕр ан кайăр, сире те ăсан какайĕпе хăна туса ярăп.



**Тӗлӗнмелле курӑк тупман пулсан, Уссури тайгине те ҫитейместӗмччӗ, зоологи сачӗ те пулмастчӗ.**

Пӗр ҫулхине маншӑн калама ҫук телейлӗ кӗркунне ҫаврӑнса килчӗ. Виҫӗ ҫул хушши сунара каймасӑр пурӑннӑ хыҫҫӑн, Ямаш вӑрманӗнче тискер кайӑксем пит йышланса ҫитрӗҫ: ӑҫта килнӗ унта куянсем сиккелесе ҫӳреҫҫӗ, ӗмӗрне ҫын пырса кӗмен чӑтлӑхсем тилӗсемпе тулчӗҫ, тарӑн варсенче упасем кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе ҫӳреҫҫӗ. Ҫакна кура ахаль ҫынсем кӑна мар, сунарҫӑсем те Ямаш вӑрманне кайса кӗме хӑракан пулчӗҫ.

Вӑрмана кайма мар, хӑшӗ-пӗрисем анкарти хыҫне те тухма хӑратчӗҫ. Тӑмвар пуҫӗнче пӗр ушкӑн упа ҫӳренине курнӑ хыҫҫӑн, Вӗҫкӗн Ваҫҫа тӑр кӑнтӑрлах, хапхисене питӗрсе, кунӗ-кунӗпе пӳртӗнче ларатчӗ. Унтан калаҫма тин вӗренекен ачасем те кулма пуҫларӗҫ.

Пурне те паллӑ, эпӗ нихӑҫан та, нимӗнле тискер кайӑкран та хӑраман. Упасене кӑна мар, Ямаш вӑрманне килсе пурӑнма пуҫланӑ арӑслана та чӗрӗллех тытса таврӑннӑччӗ-ха тесе, пӗр ирпе Ямаш вӑрманне сунара тухса утрӑм.

Ман телее, вӑл кун уяр пулчӗ. Хӗвел, Ямаш вӑрманӗ тӑррине хӑпарса ҫитсенех, кӗрхи пылчӑ-

ка пĕр самантрах типĕтсе лартрĕ. Çапла эпĕ вăрмана часах çитрĕм, упасем тытас шутпа тӳрех Уçтук варĕ патнелле утрăм.

Уçтук варĕ тĕлĕнмелле чăнкă та тарăн вар. Çӳлтен пăхсан, унăн тĕпĕ те курăнмасть. Икĕ çыранĕ тăршшĕпе пӳрт пек пысăк чулсем кăнтарса выртаççĕ. Çав чулсем айĕнче тĕпсакай пек тĕттĕм шăтăксем пур, вĕсенче упасем йышлă пурăнаççĕ.

Килте Уçтук варĕ асра та пулманнипе эпĕ пăшала вĕтĕ пулькăсемпе çеç авăрласа тухрăм. Паллах, вĕсемпе упасене вĕлерме çук. Хăвăрах пĕлетĕр: вĕтĕ пулькăсене пула эпĕ пĕрре Çĕпĕрти тайгара, йывăç тăрринче, виçĕ кун та виçĕ çĕр выçă ларнăччĕ. Çакна аса илтĕм те, пĕр пысăк тунката çине ларсах, пăшалăн икĕ кĕпçине те кашкăр пулькисемпе авăрларăм. Авăрларăм та: халĕ ĕнтĕ Уçтук варĕнчи упасене пурне те тытса пĕтеретĕп тесе, малалла утрăм.

Анчах, те ытла та ир тухнăран, кăнтăрлаччен çӳресен те упа мар, куян çури те тĕл пулмарăм. Аптăранă енне хам: ку упасем мана — Лапшу Çтаппанне — шăршăранах палласа хăйсен шăтăкĕсене кĕрсе пытанчĕç пулĕ, тесе те шухăшлатăп.

Манăн пуç мĕн шутлать, çав яланах тĕрĕс пулать. Çавăнпа эпĕ, малалла апла-капла шухăшласа çӳреме пăрахсах, тӳрех Уçтук варне анса мĕнпур упасене хăйсен шăтăкĕсенчен хăваласа кăларас, терĕм. Çав тĕлĕшпе вар тĕпне анма ансатрах вырăн шыраса вар хĕррипе утрăм.

Манăн çичĕ-сакăр çухрăма яхăнах каймалла пулчĕ, çапах та вар тĕпне анма меллĕ вырăн тупаймарăм. Юлашкинчен, вар пуçнех çитсе тухрăм. Кунта хам ĕмĕрте тĕл пулман тĕлĕнмелле курăк куртăм. Курăкĕ чăнласах тĕлĕнмелле вара. Ытти курăксем пурте хăра-хăра сарăхса ларнă, çак курăк пĕр пĕччен ешĕрсе ӳсет.

— Мĕнле курăк-ши ку?—тесе пĕшкĕнсе çак курăка тытса пăхрăм.

Вăл, манран вăтаннă пек пулса, çеçкисене çав самантрах пĕр çĕре пуçтарса лартрĕ. Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм.

— Епле мерекке курăк пулчĕ-ха ку, çынран та вăтанма пĕлет,—терĕм те ăна кăларса кайма шутларăм, чӳрече умне лартса ялти пур çынна та тĕлĕнтерес, терĕм.

Анчах вăл курăкăн тымарĕсем пит тарăн анса каяççĕ. Çавăнпа ăна ниепле те кăкласа кăларма май пулмарĕ. Эпĕ вара, Уçтук варне анма пăрахсах, унăн вăррисене шырама пуçларăм. Малтанах чечекĕ ăшне пăхрăм—унта пĕр вăрă та çук. Путех, кун вăррисем тăкăннă пулĕ тесе, пӳрнесемпе çĕре хыпашлама пуçларăм. Манăн алла çинçе туна кĕрсе кайрĕ. Туртса пăхатăп—туна яхăнне те тухмасть. Ирĕксĕрех манăн çав туна вĕçне шыраса тупмалла пулчĕ. Вăл туна çав тĕлĕнмелле курăкăн турачех пулчĕ. Çакнашкал туратсем унăн пĕрре çеç мар, темиçе те пур, хăйсем пурте курăк тавралла сарăлса выртаççĕ. Кашнин вĕçĕнчех майăр пысăкĕш хурансем пур; вĕсен

ӑшӗнче пӑрҫа пек пӗрчӗсем куҫа йӑмӑхтарас пек ҫутӑлса выртаҫҫӗ.

Эпӗ савӑнсах кайрӑм. Халӗ ӗнтӗ тымарӗ-мӗнӗпех кӑларса аппаланса та тӑмастӑп, тӳрех вӑрринчен шӑтарса ӳстеретӗп тесе, пӗр пӗрчине илме хӑтлантӑм. Анчах пӳрне вӗҫӗпе тӗкӗнсенех хуранӗ хупӑнса ларчӗ.

Ку, чӑнласах ҫынран вӑтанма пӗлет иккен, унӑн куҫӗсем те пулӗ тесе, эпӗ ҫавӑнта ҫумрах ларакан юман хыҫне пытанса тӑтӑм. Мӗн шутлани тӗрӗсех пулчӗ. Нумаях та тӑмарӑм, ҫак курӑк ҫеҫкисене сарса ячӗ, туна вӗҫӗнчи пӗчӗк хуранӗ те уҫӑлса кайрӗ. Хам куҫсене пӗр сиктермесӗр пӑхса тӑратӑп. Таҫтан пӗр нӑрӑ пырса тухрӗ те уҫӑлса тӑракан хуранӗ ӑшне кӗрсе кайрӗ—хуранӗ каллех хупӑнса ларчӗ. Мӗн пулчӗ-ха капла, тесе татах куҫсене сиктермесӗр пӑхса тӑтӑм. Хупӑнса ларнӑ хуран тӑрсан-тӑрсан каллех уҫӑлса кайрӗ. Анчах хуран ӑшӗнче нӑрӑ тӗсӗ те ҫук, унӑн шӑмми-шакки кӑна сирпӗнсе ыткӑнса ӳкрӗ.

Ҫакнашкал мерекке курӑка, мансӑр пуҫне, тӗнчере урӑх никам та курман пулӗ, мӗншӗн тесен ун пек курӑк пурри ҫинчен эпӗ никамран та илтмен. Манӑн ӑна пит нумай ӗрчетес килчӗ. Хӑвӑрах шутлӑр-ха, унашкал курӑка ӗрчетсен, усси те нумай пулать. Вӗсем ҫула выльӑх-чӗрлӗхе канӑҫ паман ӳпре-пӑвансене те пӗтӗмпех ҫисе пӗтерме пултараҫҫӗ вӗт.

Ҫапла шутласа юман хыҫӗнчен тухрӑм та тӳ-

рех курăкăн пĕр туратне татса илтĕм. Унăн вĕçĕнчи хуранĕ каллех хупăнса ларчĕ. Эпĕ вăл уçăласса кĕтсе те тăмарăм, васкасах унăн ăшĕнчи çутă пĕрчине кăларса илтĕм. Анчах вăл пĕрчĕ пиçсе çитмен, çавăнпа ăна киле те илсе каяс темерĕм. Çапах та ăна пăрахса хăвармарăм, хам çисе ятăм. Вăл калама çук тутлă пулчĕ, ун пек пăрçа эпĕ хам ĕмĕрте те тутанса курман.

Сасартăк манăн ура вăйĕ пĕтнĕ пек туйĕнчĕ, куç хупанкисем йывăрланса çитрĕç, анаслакан пултăм. Эпĕ пуç гйне курăк татса хутăм та выртса çывăртăм. Хам питĕ хăрушă тĕлĕк курнă: Ямаш вăрманне улăп евĕр пысăк çын килнĕ пек, вăл пĕрре ярса пуссах çичĕ çухрăм каять пек. Çак çын хăрах урипе ман тĕлех пусрĕ те, эпĕ кăштах унăн атти айне пулаттăм пек. Хăранипе кăшкăрсах ятăм. Хам сасăпа вăранса кайрăм та, ăна-кăна пĕлмесĕр тăрса лартăм.

Эпĕ Ямаш вăрманĕнчен те çӳлĕ ларатăп иккен, йывăçсен тăррисем манăн сухала та перĕнмеççĕ. Мĕнле-ха капла пултăм? — тесе хамран-хам тĕлĕнсе кайрăм. Урасем çине пăхрăм. Вĕсем те темĕн пек вăрăмланса кайнă та Ямаш ялĕн анкарти хыçнех çитнĕ. Хăйсем ӳснĕ май йывăçсене унталла-кунталла çеç йăвантара-йăвантара хăварнă.

Нимĕн тума аптăранипе ура çине сиксе тăтăм. Ямаш вăрманĕ чĕркуççирен те аялта тăрса юлчĕ. Манăн пуç хупхуран капланса килекен çу-



Ямаш вăрманĕ чĕркуççирен те аялта тăрса юлчĕ.

мăр пĕлĕчĕсем ăшне кĕрсе кайрĕ. Çав пĕлĕтсене эпĕ пĕрре вĕрнипех аяккалла сирсе ятăм. Çакăн хыççăн манăн пуçри шĕлепке те аванах курăнакан пулчĕ. Пуç ӳснĕ май вăл та сарăлса пысăкланса кайнă-мĕн. Пиншакпа атă çине пăхрăм — вĕсем те, шĕлепке пекех, сарăлса ӳссе кайнă, хăйсем тата пĕри те ниçтан çурăлман. Куншăн вара пит савăнтăм, мĕншĕн тесен манăн хама валли çĕнĕ тумтирсем илсе укçа та тăккаламалла пулмарĕ.

Анчах манăн пĕр инкек пулчĕ. Хам ӳссе пынă май, çакки татăлса кайнипе, манăн пăшал таçта ывтăнса ӳкнĕ. Эпĕ уншăн пит кулянма тытăнтăм, мĕншĕн тесен манăн пек лайăх пăшал таврара урăх никамăн та çукчĕ: вăл темĕнле тискер кайăка та тĕл персе тивертетчĕ.

Çав тери лайăх пăшала çын тупĕ те ман пекех чаплă сунарçă пулĕ тесе, эпĕ ăна пикенсех шырама пуçларăм. Анчах темле тăрăшса шырасан та пăшала тупаймарăм. Юлашкинчен, хам Уçтук варĕ пуçне выртса çывăрнине аса илтĕм те, пăшал çав вар тĕпнех ывтăнса ӳкнĕ пулĕ тесе, Уçтук варне шырама пуçларăм. Ăна та тупаймарăм. Тарăхнипе пăшал çине ал султăм та малалла кайрăм. Пĕр утăм ярса пуссах çичĕ километрта ларакан Йĕкĕрвар ялĕ хыçне çитрĕм. Тĕлĕнсех кайрăм: манăн пăшал çак ял хыçĕнче выртать пăрать. Кăна пĕлнĕ пулсан, пăшала пикенсе шырама та кирлĕ марччĕ: вăл хамран пĕр утăмра çеç выртнă иккен. Эпĕ хамăн куçсем

питĕ çивчĕ курнинчен тĕлĕнсех кайрăм. Вĕсем Уçтук варне мар, çав тери пĕчĕк япалана та — кăранташ пысăкĕш тăрса юлнă япалана та — шыраса тупма пултарчĕç.

Чăнласах манăн пăшал кăранташ пек çеç тăрса юлнă. Çакки çуккипе тата ниçта хума аптăранипе эпĕ ăна пиншакăн умри кĕсъине чикрĕм. Вăл кĕсъе тĕпне анса выртрĕ те курăнми пулчĕ. Сасартăк, пăшалсăр пырсан мана никам та сунарçă вырăнне шутламĕ тесе, ăна калла кăларма шутларăм, сылтăм алла кĕсъене чиксе ятăм.

Малтан, çичĕ километр ывтăнса ӳкнĕ пулсан та, пăшала часах шыраса тупрăм, халĕ пиншакăн умĕнчи кĕсъине чикнĕ пулсан та, ăна пит нумай шырамалла пулчĕ. Темĕн пек тăрăшса хыпаласа пăхрăм, пăшал ниепле те алла кĕмест. Пĕр енчен, кĕсъе шăтăк пулман-ши? тесе иккĕленсе пăхатăп. Анчах карчăк мана нихăçан шăтăк кĕсъесемпе çӳретменнине аса илсе, пăшал кĕсъерех пулĕ, тетĕп. Тепĕр енчен, пиншака хывса кĕсъене тавăрса силлес тесе те шутлатăп, пиншакĕ пĕчĕкленсе ларасран хăратăп. Ара, пиншаксăр юлсан, шăнса вилме те пулать çак çанталăкра, тетĕп. Çапла манăн пиншак кĕсъинчи пăшала лăпах каçчен шырамалла пулчĕ. Вăл çавăнтах, кĕсъе тĕпĕнчех выртнă-мĕн.

Çавнашкал тертленнĕ хыççăн пăшала, пĕчĕккĕ пулсан та, çурăм хыçнех çакма шутларăм: унтан вăл ниçта та çухалмĕ, терĕм. Анчах манăн пăшалăн çакки çук, вăл хам ӳснĕ май татăлса таçта

сирпĕнсе ӳкнĕ. Сасартăк, темле сăлтавпа килтен илсе тухнă вĕрен çинчен аса илтĕм. Ман телее, çак вĕрен çурăм хыçĕнчех çакăнса тăрать. Вăл мана çăпата кантри пек çеç туйăнчĕ. Эпĕ савăнсах кайрăм. Вĕрене салтса илтĕм те унтан пăшал çакки турăм. Вунă хăлаç тăршшĕ вĕрен хам тавра лăпах пĕрре çавăрса çыхма çитрĕ.

Кун каçалана сулăнчĕ. Эпĕ çапах та киле таврăнмарăм. Тухнă пек чухне ытти вăрмансене те кайса çӳреме шутларăм та малалла утрăм. Манăн çул калама çук ӳсĕнсе пырать: пĕрре пусатăп та çичĕ километр тăватăп. Çапла эпĕ поездсене кăна мар, аэроплансене те хуса çитсе иртсе каятăп, хам хыçа курăнмиех тăратса хăваратăп.

Урал тăвĕсем патне çитрĕм. Вĕсен пысăк та çӳлĕ тĕмесем пур. Эпĕ урасемпе çав тĕмесем çине пусса утса пыратăп. Çапла татах та çӳлленсе кайрăм та, манăн пуç тачка пĕлĕтсен ăшĕнче пычĕ.

Сасартăк манăн сылтăм хăлха патĕнче темĕнле сасă сĕрлени илтĕнчĕ. Мĕнле сасă-ши ку, нăрă мар-ши ку тесе, хăлха патне алла ярса пăхрăм. Тĕлĕнсех кайрăм: манăн алă икĕ моторлă аэроплана ярса тытрĕ. Тинех ăнлантăм: манăн хăлха патĕнчи сасă çак аэропланăн моторĕсем кĕрленĕ сасă пулнă-мĕн.

Вăл аэроплана эпĕ хам ывăç тупанĕ çине лартрăм та пĕчĕк кантăкĕнчен шалалла пăхрăм. Унта çынсем туллиех ларса пыраççĕ. Вĕсем пурте халиччен ĕмĕрте те çын пырса кĕмен тайгана ылттăн тухакан вырăнсем шырама каяççĕ-мĕн.



Тĕлĕнсех кайрăм: манăн алă икĕ моторлă аэроплана ярса тытрĕ.

Эпĕ — ярса пусмассерен çичĕ километр кайнине пĕлсен, çынсем пурте хăйсене аэропланĕ-мĕнĕпех хампа пĕрле илсе кайма ыйтрĕç. Эпĕ килĕшрĕм. Хам сывланипе вĕçсе ӳкĕ тесе, эпĕ аэроплана икĕ пӳрне хушшине хĕстертĕм. Çакăн хыççăн аэроплан ăшĕнчи çынсем савăнсах кайрĕç. Вĕсем пурте пĕчĕк кантăккисене уçса ярса çул тăршшĕпе каласса пычĕç. Çапла манăн çул татах ӳсĕнсе пычĕ. Тепĕр сехет кайсанах эпĕ Инçетри Хĕвелтухăç крайне çитрĕм.

Кунта манăн аэроплан ăшĕнче ларса пыракан çынсемпе уйрăлмалла пулчĕ. Вĕсен çурçĕр еннелле каймалла пулчĕ. Хăйсене пĕр кун каяс вырăнне пĕр сехетрех илсе çитернĕшĕн çынсем мана чĕререн тав турĕç, тата нумай пурăнма сывлăх сунчĕç. Эпĕ тискер кайăксем тытма шутланине пĕлсен, лётчикĕ мана Уссури тайгине кайма сĕнчĕ, унта каймалли çула та хăех кăтартса пачĕ. Эпĕ аэроплана ывăç тупанĕ çине лартрăм та çынсем пурте кантăкĕсене хупрĕç. Лётчикĕ кабина ăшĕнчен сиксе тухса, манăн ывăç тупанĕ тикĕсси-тикĕсмаррине сăнама пуçларĕ.

— Тапранса кайма хĕнтерех, — тет лётчик.

— Нимĕн те хĕн мар, — тетĕп. — Эсĕ моторĕсене ĕçлеттерме пуçла та кабинăна кĕрсе лар, аэроплана хам вĕрсе тапратса ярăп, — тетĕп.

— Апла юрамасть, — тет лётчик. — Тапранса каяс умĕн аэропланăн сахалтан та пĕр минут хушши сан ывăç тупанĕ тăрăх чупса каймалла, — терĕ те аэроплан ăшĕнчен пĕр çыннине кă-



Аэроплан вăта пӳрне вĕçне çитсенех сывлă-шалла ерипен хăпарса кайрĕ.

ларса, унпа пĕрле ман ывăç тупанне виçме пуç-ларĕ.

Манăн ывăç тупанĕ калама çук пысăк иккен. Анчах çапла пысăк пулсан та, лётчик кăшт çĕре ӳксе вилетчĕ. Вăл акă мĕнле пулчĕ: лётчикĕ, мал-та пыраканскер, шĕвĕр пӳрнепе вăтам пӳрне хушшинчи çурăка анах кайрĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ — манăн пилĕк тĕлĕн-че шап-шурă япала уçăлса кайрĕ. Лётчик хăйпе пĕрле парашют илнĕ-мĕн. Манăн пӳрнесем хуш-шинчен тухса ӳксенех парашютне уçса янă. Кун-шăн вара эпĕ çеç мар, аэроплан ăшĕнче ларакан çынсем те питĕ савăнчĕç.

Лётчика эпĕ çĕре анса çитичченех хам ывăç тупанĕ çине çĕклесе лартрăм. Вăл парашютне майласа пуçтарчĕ те çурăмĕ хыçне çакрĕ. Вăл аялалла ӳкнĕ пулсан та нимĕн те хăраман. Хă-рама мар, вăл манăн ывăç тупанĕ çуррине çи-тиччен тăватçĕр çитмĕл сакăр метр пулнине те манман.

Эпир вара ывăç тупанне малалла виçсе аппа-ланса та тăмарăмăр, тăватçĕр çитмĕл сакăр метр çумне тата çавăн чухлĕ хушрăм та, хамăн ывăç тупанĕн тăрăшшĕ пĕр километр патнех пулнине пĕлтĕм.

— Епле пулсан та чуптарма тăрăшăп, — тет лётчик. — Эсĕ пĕр минут та пулин сывламасăр тăр, — терĕ те вăл аэроплан моторĕсене ĕçлет-терсе ячĕ.

— Манăн вăта пӳрне вăрăмрах, эсĕ çак пӳрне

тăрăх чуптарса пыма тăрăш, — терĕм те лётчика вăта пӳрне çине кĕрсе каякан йĕр туса патăм.

Аэроплан вăта пӳрне вĕçне çитсенех сывлăшалла ерипен хăпарса кайрĕ. Ун ăшĕнче ларса пыракан çынсем шурă тутăрсем вĕлкĕштерсе манпа сывпуллашрĕç. Анчах хам, сывламасăр тăма хăнăхмантăр, пĕр минут хушши сывламаннипех кăштах чыхăнса вилсе каяттăм.

Аэроплан часах куçран çухалчĕ, эпĕ лётчик кăтартса панă çулпа малалла утрăм. Манăн нумай каймалла пулмарĕ, — çич-сакăр утăм ярса пуссанах Уссури тайгине çитрĕм.

Вăл тайга калама çук пысăк. Унта эпĕ этем пырса кĕмелле мар вырăнсем, асар-писер тарăн варсем тĕл пултăм. Вĕсенче темĕн тĕрлĕ тискер кайăксем çĕмĕрсе çӳреççĕ, хăйсем мана курсанах хăраса тараççĕ. Çавăнпа эпĕ вĕсенчен хăраса тăмарăм. Пĕрре пĕшкĕнтĕм те пĕр пысăк упине ярса тытрăм. Анчах вăл, чи пысăк упи пулсан та, манăн алра кушак çури пек çеç туйăнать, хăй ман çине куçĕсене сиктермесĕр пăхать, манран хăранипе сиксе чĕтрет. Пăхатăп — манăн ура вĕçĕнче тепĕр пысăк упа хăйĕн ултă çурипе мĕшĕлтетсе çӳрет. Эпĕ вĕсене те тытса пиншак кĕсъине ятăм. Сакăр упа янă пулсан та, манăн кĕсъе çурри таран та тулмарĕ. Вĕсене упасем кăна мар, ытти тискер кайăксене те тытса яма пулать, терĕм.

Тепĕр утăм ярса пусрăм та хĕррисенче пит çӳлĕ хăях-хăмăш ӳсекен шурлăх патне çитсе тă-

тăм. Çав хăях-хăмăш хушшинче пит пысăк тигрсем хĕвел ăшшипе хĕртĕнсе харлаттарса çывăраççĕ. Ахаль сунарçă вĕсене ниепле те шыраса тупайрас çук, тупсан та вĕсем патне пырайрас çук.

Эпĕ хам çакнашкал телейлĕ пулнăшăн савăнсах кайрăм. Савăнма та тивĕçлĕ. Ара кун пек пысăк çын пулман пулсан, çак тĕлĕнмелле çĕршыва та килсе кураймастăмччĕ, тигрсем ăçта пурăннине те пĕлместĕмччĕ.

Малтан эпĕ миçе тигрне шутлама пуçларăм. Анчах вĕсем пит нумай — вĕсене ирччен те шутласа пĕтерес çук. Çавăнпа шутласа тăрса вăхăта та ирттерес темерĕм, пĕшкĕнтĕм те тӳрех икĕ тигрне ярса тытрăм.

Тигрсем, ăйăхран хăраса вăраннипе, тайгана чĕтретсе çухăрма тытăнчĕç. Вĕсен сассипе çывăракан тигрсем пурте сиксе тăчĕç те, шăтăк михĕрен тăкăнакан пăрçа пек, унталла-кунталла сапаланса пĕтрĕç. Алла ярса тытнă тигрсем те пĕтĕм вăйран тарасшăн пулчĕç, пĕри пуç пӳрнерен çыртса илчĕ. Анчах вăл çыртни мана шăши çыртни пек çеç пулчĕ. Эпĕ çапах та тигрне хытах çилентĕм, шĕвĕр пӳрнепе сăмсинчен шак! тутартăм. Унăн çăварĕнчен юн палкаса юхма пуçларĕ. Эпĕ юнне шăлса аппаланса та тăмарăм, икĕ тигрне те кĕсъене ятăм, хам виçĕ утăм тусах арăслансем йышлă пурăнакан вырăна çитсе тăтăм.

Арăслансем тигрсем пек мар иккен, вĕсем калама çук чее. Вĕсем манăн ура пуснипе хуçăлса



Пĕр арăсланĕ çĕр çĕмĕрсе çухăрса ячĕ те
атă пусĕнчен çыртса илчĕ.

аннă йывăç сассипех вăранчĕç. Анчах хăйсем тарса пытанмарĕç, тўрех хама тапăнма пикенчĕç. Пĕр арăсланĕ çĕр çĕмĕрсе çухăрса ячĕ те атă пуçĕнчен çыртса илчĕ. Эпĕ урана пĕрре çеç силлерĕм, атă пуçĕнчен çыртса илнĕ арăслан çичсакăр километра ывтăнса ўкрĕ. Çакна курсан, ытти арăслансем хăрасах ўкрĕç. Хăшĕсем самантрах таçта тарса пытанчĕç, манăн пата чи пысăккисем кăна тăрса юлчĕç. Эпĕ вĕсене текех вăрçтарса та тăмарăм. Чи пысăк икĕ арăсланне тытса кĕсъене ятăм та хам каллех малалла утрăм.

Вăл кун эпĕ Уссури тайгинче лăпах кăнгăрлаччен çўрерĕм. Çапла пур вырăна та çитсе куртăм, унта пурăнакан тискер кайăксене пурне те пĕрер мăшăр тытрăм. Манăн пиншак кĕсйисем те хĕррипе танах тискер кайăксемпе тулчĕç.

Кун каç еннелле сулăнчĕ. Манăн хырăм калама çук выçса çитрĕ. Эпĕ тайгара пĕр столовой шыраса тупрăм. Унта вăрман касакан пилĕк çĕр рабочи валли пысăк хурансемпе виçĕ тĕслĕ апат пĕçерсе хатĕрленĕ. Анчах вăл апатсем виçĕ çăвар кăна пулаççĕ. Паллах, виçĕ çăвар хырăма йăпатма та çитмест, вăрман касакан рабочисем те выçах тăрса юлĕç тесе, эпĕ апатне çимерĕм. Килте юратнă карчăк пĕр ăсан пĕçерсе хунă пулĕ, киле çитем те хырăм сарличчен çием, тесе васкаса киле май утрăм.

Çул çинче манăн сасартăк хырăм пакăртатма пуçларĕ. Эпĕ хăракан пулса тата хытăрах утрăм.

Часах хамăр ялтан виçĕ километрта ларакан Чурачăк больницине çитрĕм.

Чурачăк больницине иртнĕ çул кăна турĕç. Вăл виçĕ хутлă. Хăй, сăрта ларнăран, таçтанах çутăлса курăнать. Çавăн пек пысăк пулсан та, вăл маншăн пĕчĕк пукан майлă çеç туйăнчĕ. Эпĕ вăрăм çул хыççăн пит ывăнса çитнĕччĕ. Лармалли меллĕ вырăн шыраса йĕри-тавралла пăхса çаврăнтăм, анчах мана лармашкăн çак больницăсăр пуçне урăх нимĕнле вырăн та пулмарĕ. Эпĕ больница йăтăнса анасран, хуллен ун тăррине лартăм, пĕр кантăкĕнчен ерипен шаккаса тухтăрсене тухма ыйтрăм.

Чăнкăр-р! тесе çĕмĕрĕлчĕ больница кантăкĕ.

Çакăн хыççăн больницара ĕçлекен çынсем пурте сиксе тухрĕç, мана курсан, тĕлĕнсе хытсах кайрĕç. Самантрах вĕсем пусмасем тупса ман тавралла лартса тултарчĕç. Тухтăрсем çав пусмасем тăрăх хăпарса кайрĕç те мана пур енчен те итлеме тытăнчĕç.

— Мĕн ыратать? — тесе ыйтрĕ пĕр тухтăрĕ.

— Вар пăкăртататать, — тетĕп çакна.

— Мĕн те пулин чĕр япала çимерĕн-и? — тет тухтăр.

Эпĕ ăна Уçтук варĕ пуçĕнче тĕлĕнмелле курăк вăррине çисе çапла пысăкланса кайни çинчен каласа патăм.

Тухтăрсем татах тĕлĕнсе кайрĕç. Аллисемпе пуçĕсене тытса мана пĕчĕклетмелли меле шухăшласа кăларма ларчĕç.

— Тупрăм, тупрăм! — тесе кăшкăрса ячĕ ват тухтăрĕ.

Ана касторка çеç ĕçтермелле, вара çав усал курăкăн вăррине тасатса кăларма пулать, — тет.

— Вара пĕчĕкленсе малтанхи пекех пулатăп-и? — тетĕп.

— Пулма пултаратăн, — теççĕ тухтăрсем.

Эпĕ хам кĕсъерен пĕр ывăç арăслансемпе тигрсем туртса кăлартăм та:

— Мана пĕчĕклетсен, çаксем вара хама та, сире хăвăра та çисе яма пултараççĕ, — терĕм.

Тухтăрсем хăраса кăвакарсах кайрĕç, айвантараххисем тӳп те тӳп! месерле кая-кая ӳкрĕç.

— Хăрама кирлĕ мар, — терĕм те арăслансемпе тигрсене каялла кĕсъене чиксе лартрăм. Тухтăрсем вара ман кĕсъери тискер кайăксене мĕн тăвасси çинчен шутлама тытăнчĕç, часах вĕсене эмелпе вĕлерме килĕшрĕç.

— Эпĕ хамăр колхозра зоологи сачĕ тăватăп, çавăнпа вĕсене темĕн тусан та вĕлерттерместĕп, — терĕм çаксене.

Пĕр тухтăрĕ мана тарăхсах çитрĕ те:

— Апла пулсан, ăçтан килнĕ çавăнтах кай! — тесе ятлаçса вăрçма пуçларĕ.

— Ара, эпĕ Лапшу Çтаппанĕ пулатăп вĕт, — терĕм.

Тухтăрсем тин палласа çитрĕç мана. Хăйсем пурте ал парас шутпа ман еннелле аллисене тăсрĕç, эпĕ вĕсен аллисене кача пӳрнепе тĕрте-тĕрте çеç тухрăм. Çакăн хыççăн тухтăрсем каллех



Больницăра ĕçлекен çынсем пурте сиксе тухрĕç,
мана курсан, тĕлĕнсе хытсах кайрĕç.

манӑн кӗсъери тискер кайӑксене мӗн тӑвасси ҫинчен шутлама пуҫларӗҫ.

— Нумай шутлама та кирлӗ мар. Сирӗн ара, операци тӑвас умӗн ҫынсене шӑршлаттармалли эмель пулӗ?—терӗм.

— Пур, пур,—терӗҫ тухтӑрсем.

— Пур пулсан, тискер кайӑксене ҫавна шӑршлаттарса ҫывратӑр та, хама пӗчӗклетӗр!—терӗм.

Тухтӑрсем савӑнсах кайрӗҫ. Малтан ҫав эмеле шӑршлаттарса кӗсъери тискер кайӑксене ҫывратрӑмӑр, вӗсене больница картишӗ тулли выртгарса тухрӑмӑр. Шӑнса каясран, кашнинех шӑналӑксемпе витсе хутӑмӑр. Кайран, тухтӑрсем ман ҫӑвар патне ҫитекен вӑрӑм пусма шыраса тупрӗҫ те, ҫавӑн тӑрӑх витри-витрипе касторка ҫӗклесе хӑпарма тытӑнчӗҫ.

Ҫирӗм ултӑ витре касторка ӗҫсен, манӑн вархырӑм пӗтӗмпех тасалса ҫитрӗ те, эпӗ малтанхи пекех пӗчӗкленсе юлтӑм, больница тӑрринчен ҫӗре пусма тӑрӑх антӑм, тухтӑрсене чӗререн тав турӑм та, тискер кайӑксене тиесе кайма тесе, хамӑр колхоза нимене чӗнме чупрӑм.

Хамӑн кӗсъесене тултарса таврӑннӑ тискер кайӑксене колхоза ҫӗр те виҫӗ лавпа турттарса пытӑмӑр. Тискер кайӑксем виҫӗ кун та виҫӗ ҫӗр пӗр хускалмасӑр харлаттарса ҫывӑрчӗҫ. Ҫав вӑхӑтра эпир кашни кайӑкӗ валлиех тимӗр решеткеллӗ уйрӑм читлӗхсем туса хатӗрлерӗмӗр, кайӑкӗсене кашнинех йӑйӑхран вӑранса ҫитиччен ҫав читлӗхсене хупрӑмӑр.

Çапла пирĕн колхозăн хăйĕн калама çук пысăк зоологи сачĕ пулса тăчĕ. Вăл сад тавраллa эпир çӳлĕ хӳме тытса çаврăнтăмăр, алăкĕ тăррине виçĕ тĕрлĕ краскăпа:

| |
|---|
| **Тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă**<br>**ЛАПШУ ÇТАППАНĔ**<br>**тунă зоологи сачĕ** |

тесе вывеска çырса çапрăмăр.

Çав сад директăрне мана хамах суйласа лартрĕç. Эпĕ вăл сада Октябрь революци уявĕ кунĕ уçрăм. Демонстраци иртнĕ хыççăн, манăн тискер кайăксене курма тесе, мĕнпур халăх пухăнчĕ. Эпĕ вăл кайăксене чи малтан хамăр колхозри ача садне çӳрекен ачасене кĕртсе кăтартрăм.



## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*


Пĕр каçрах çĕр те икĕ куян тытрăм . . . . . . 3
Тилĕ тытма та вĕрентĕм . . . . . . . . . . . . 15
Пăсара пирки ĕмĕрте пĕрре суйма та тиврĕ . . . 26
Кашкăрне чĕрĕллех тытрăм, анчах сылтăм аллăм аманчĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
Пĕр упашăнах виçĕ талăк йывăç тăрринче çывăртăм 45
Çăка хăвăлĕнче ларсах арăслана чĕрĕлле тытрăм 57
Саккăр персех пĕр лав пăчăр тытрăм . . . . . . 68
Пахчал кооперативне вăлтасем килмен пулсан, кăвакал та тытас çукчĕ . . . . . . . . . . 78
Хуркайăксене те лавĕ-лавĕпех тытаттăм . . . . . 85
Ямаш вăрманĕнчи ăсансене пурне те хам хыçран ертсе килтĕм . . . . . . . . . . . . . . 92
Тĕлĕнмелле курăк тупман пулсан, Уссури тайгине те çитейместĕмччĕ, зоологи сачĕ те пулмастчĕ 98



Редактор С. Эльгер.

НТ 00057 Подп. к печ. 11/IV-44 г. 7,5 п. л. Тираж 3000. Заказ 330 г. Чебоксары, Тип. № 1. Управ. Полиграф-пром. при СНК ЧАССР

№ 6

Цена 6 руб.

*КУЗЬМА ЧУЛГАСЬ*

**Сказки охотника**

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ

Чебоксары — 1944